... Ц. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр

1938 МАРТ 30 ЙУНКУН
73 (4886)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Ăмăрту догăвăрĕсене пурнăçа кĕртессишĕн

Краснодар крайĕнчи Шчербинский районри колхозниксем сталинла 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илессишĕн, çĕрçĕсенче çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн социалисăмла ăмăртăва тухма чĕнсе калани колхозсенчи мĕн пур хресчен шухăшĕсемпе кăмăлĕсене палăртакани пулса тăрса, пĕтĕм Совет çĕршывĕ тăрăх йалхуçалăхĕнче социалисăмла ăмăрту йалавне çÿле çĕклентерчĕ. „Айтăр, йулташсем, —тенĕ шчербинцăсем чĕнсе каланинче, —пуçланнă çултаlăкра хамăрăн çитĕнÿсене ÿсĕнтерме татах дайăхрах, татах хастаррăнрах ĕçлер. Епĕр сире, 1938 çул социалисăмла йалхуçалăхĕ чечекленсе малала ÿсмели çултаlăк пултăр тесе, ăмăртăва хутшăнма чĕнетпĕр".

Шчербинцăсем чĕнсе каланипе пирĕн республикăри колхозниксем те пурте пысăк кăмăлпа йышăнчĕç. 1938 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн колхозпа колхоз, районпа район пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса ĕçлес йухăм анлăн сарăлса кайрĕ.

Колхозниксем иртнĕ çулхи çĕнтерÿсемпе чарăнса тăмаççĕ. Вĕсем 1938 çулта татах та вăйлăрах тырпул туса илесшĕн, мĕншĕн тесен, шчербинцăсем калашле, „тырпул мĕн чухлĕ вăйлăрах пулать, колхозлă йал çавăн чухлĕ пуйанрах пулать, пирĕн аслă тăван çĕршывăн вăйхăвачĕ çавăн чухлĕ ытларах ÿсет." 1938 çулта вăйлă тырпулшăн кĕрешме колхозниксен пысăк кăмăл пуррине уйăхмаларах пулса иртнĕ йалхуçалăхĕпче (?)ăлта пыракансен республикăри сльочĕ те уççăн кăтартса парĕ.

Социалисăмла ăмăртса ĕçлени пĕтĕм ĕç тухăçлăхне ÿстерет, халăхра пытанса тăнă талантсене тупса кăларать, çĕнĕ рекордсем туса, кивелсе кайнă вĕрентÿсене ÿпĕнтерсе хурать. „Ăмăртури чи пахха та ырри—вăл çынсем ĕç çине мĕнле пăхассине тĕпренех улăштарни пулать, мĕншĕн тесен ăмăрту ĕçлеве, ĕлĕк шутланă тăрăх намăслăхпа йăвăр инкек пулнăскере—**хисеплĕх ĕçĕ, мухтавлăх ĕçĕ, паттăрлăхпа геройлăх** ĕçĕ туса хурать" **(Сталин).**

Партипе правительствă пирĕн колхозсене лайăхрах ĕçлеме мĕн кирлине пурне те парса тăрать. Йалхуçалăхĕ çултан çула ытларах та ытларах машиналанать. 18 машинă-трактăрлă станци çумне çак çуркуннерен пуçласа татах 2 станци хутшăнать. Республикипе кăçал МТС-сенче пин трактăр ытла ĕçлемеле пулать. Çавăнпа пĕрлех государствă колхозсене суртлă вăрлăх, çĕре çемçетмели минералла çăнăхсем, йалхуçалăх специалисчĕсем парса пулăшать. „Лайăх тырпул туса илесси халь ĕнтĕ хамăртан, пирĕн ĕççен, колхозсенче ĕçе лайăх организацилениничен килет" (Молăтăв).

Социалисăмла ăмăрту, чăн-чăн большевикла ăмăрту вăл, вăхăтран вăхăта пĕрпĕрине тĕрĕслесе тăнипе пулса иртмеле. Пирĕн халь кашни район 1938 çул валльи хăйĕн çине конкретлă обйазательствăсем илнĕ. Анчах та, калас пулать, çав обйазательствăсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине пайан куна нихăш районта та тĕрĕслесе пăхман, ăмăртса ĕçлекен районсем пĕр-пĕрне тĕрĕслесе тухассине организацилемен. Акă, Йĕпреç районĕ Вăрнар районĕпе йанвар уйăхĕнчех ăмăрту договăрĕ туса çирĕплетнĕ. Икĕ уйăх хушшинче пĕр-пĕринпе калаçса та пăхман. Вăл çеç те мар, пĕр-пĕринчен районри хаçатсене те илсе тăмаççĕ. Çакă ĕнтĕ,—„Вырăнти руководительсем хушшинче час-часах çакнашкал çынсем тупăнаççĕ: вĕсем ăмăрту çинчен çырнă догăвăрсем çине алă пусма йуратаççĕ, ăмăрту пуçланнипе мухтанма йуратаççĕ, ун çинчен хаçат-журналсем çинче кăшкăрма та хирĕç мар, анчах хăйсем çине илнĕ обйазательствăсем çинчен тепĕр куннех манса кайаççĕ",—тесе „Правда" хаçат йанвар уйăхĕнче сырнине тепĕр хут çирĕплетет.

Çавăн пекех, ăмăртса ĕçлекен колхозсем хушшинче те суракине хатĕрленес тĕлĕшпе пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслесси çителĕксĕр пырать. Колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине агрономсене тĕрĕслесе тухма хушса Чăваш çĕрĕç халăх комиссариачĕ приказ пани çеç кунта йăчах çителĕксĕр. Ăмăрту догăвăрĕсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслесе тухас ĕçе колхозниксен анлă массипе хутшăнтармала. Ĕçе çапла организацилени çеç чăнчăн большевикла ăмăртса ĕçлени пулать. Çавна халь Çĕрĕç халăх комиссариачĕпе пĕрле районри руководительсем те чылайĕшĕ манна.

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн ĕнерхи номерĕн уместайĕнче колхозсенче вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе республикăра ĕç пит йапăх пынине кăтартса панăччĕ. Вăрлăхсăр пуçне республикăра ытти тĕрлĕ ĕçсем йĕнĕпе те туса çитерменнисем нумай. Трактăрсене тата трактăр плугисемпе çейăлкисене йусамалли плана пайан кунччченех тулман. Горючи хатĕрлемелли плана 70 процента çити çеç тултарнă. Çуракинче трактăрсем паллă вырăнта тăрать, çапла пулсан та чылай МТС-сенче (Канаш, Йăрачкав, Патăрйел тата ыт. те) трактăрисене иртнĕ çулхи ĕçсемшĕн халь те тÿлесе татман.

Халь ĕнтĕ пĕтĕм ĕç бригадăна куçмала. Анчах чылай колхозсенче бригадăсен йышĕсене йĕркелесе çитермен, 1938 çул валльи ĕç нормисем тăвас ĕçе тытăнман. Ĕçе организацилес ыйту халь пит çивĕччĕн тăрать. Çирĕп бригадăсăр вăйлă тырпулшăн кĕрешесси çинчен каласмалли те çук, бригадăсене çирĕплетмесĕр колхозсенче чăн-чăн социалисăмла ăмăрту та пулма пултараймасть. Колхозсенче ĕçе организацилес ыйту çинчен Çĕрĕç халăх комиссариачĕ манса хăварнине пит пысăк çитменлĕх тесе шутламала.

Çуракинче республикипе пиншер çын йаровизатăр, химизатăр, звенийевойсем, машинăпа ĕçлекенсем тата ыт. кирлĕ. Çав çынсем халь кашни колхозрах паллă пулмала, хăйсен ĕç техникине лайăх пĕлсе тăмала. Çак тĕлĕшпе те халь нихăш район та мухтанма пултараймасть.

Социалисăмла ăмăрту догăвăрĕсем тăрăх илнĕ обйазательствăсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслени халиччен туса çитермен ĕçсене хăвăрт туса çитерме пулăшаканĕ пулса тăмала. Ăмăрту догăвăрĕсене тĕрĕслес ĕçе кам хакламасть, çавă вăл социалисăмла ăмăртăва та ăнланмасть. Ишлей районĕнче халиччен пĕр колхозра та ăмăрту догăвăрĕсене тĕрĕслеме тытăнманнине çапла çеç ăнланма пулать. Районĕпе 108 колхозран пайан куна 84 колхоз çеç ăмăртăва хутшăнни те ăна лайăх çирĕплетет. Çавăн хыççăн ĕнтĕ Ишлей районĕ çуракине хатĕрленес ĕçре кайа йулса пынинчен тĕлĕнмелли нимĕн те çук.

Йĕпреç районĕнче те çавăн пекех. Ăмăртăва тĕрĕслес ĕç çинчен çеç мар, районра миçе колхоз ăмăртса ĕçленине те никам та пĕлмест.

Çуракине тухас вăхăт çывхарса çитрĕ. Малала çавăн пек фактсемпе пĕр сехетлĕхе те ~~килĕшсе~~ тăма çук. Ăмăртăва чăрмантаракансене çийĕнчех çапса аркатмала. Çуракине ăнăçулăн иртерме цур йенчен те хатĕрленсе çитесси вăл кăшкăрнипе луш сăмах çаптарнинчен мар, ĕçе йалан конкретлă, оперативлă йертсе пынинчен, колхозниксем хушшинче массăлă-политикăла ĕçе сарса йанинчен, социалисăмла ăмăртăва чăн-чăн большевикла организацилениничен килнине колхоз, МТС, çĕрĕç оргăнĕсен тата районри руководительсен уççăн пĕлсе тămала.

Пирĕн колхозсем вăйлă тырпулшăн кĕрешес тĕлĕшпе кăçал икĕ республикăна—Мордва тата Тутар республикине ăмăртува чĕнчĕç. Çакă вăл колхозсем çине кăçал уйрăмăнах пысăк ответлăх хурать, вăл ăмăртура мала тухассишĕн нихăçанхиччен лайăхрах ĕçлеме хушать. Çуракине хатĕрленес ĕçсене пурне те халех туса çитермелли шанчăклă майа—большевикла ăмăртăва анлăн сарса йарса, виçĕ республикă ăмăртăвĕнче мала тухассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешер.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн 1937 çулхи ĕçĕсем çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ мартăн 28-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн 1937 çулхи ĕçĕсем çинчен ыйту итлесе сÿтсе-йавнă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакăн пек постановлени йышăннă:

1. Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн 1937 çулхи ĕçĕсем çинчен ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăм начальникĕн Шмидт йулташăн докладне тата ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Совет Контроль Комиссти председателĕн Коçиор йулташăн содокладне итленĕ хыççăн, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн 1937 çулхи ĕçĕсем çителĕксĕр, тесе шутлать.

2. Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн транспăрт суднисем çуррине йахăнах тата пăрçĕмĕрен флот пĕтĕмпе пекех пăрсем хушшинчех хĕл каçаççĕ, пăрсемпе пĕрле куçса çÿреççĕ, çавăнпа вĕсем пĕтес хăрушлăх умĕнче тăраççĕ,—çакă вăл, Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн руководстви çавнашкал чухне, ăнсăртран пулман, тесе шутлать ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕ 1937 çулхи навигацире тунă çав тери пысăк йăнăшсен сăлтавĕ, çавăн пекех, тата Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн ĕçĕнчи ытти пысăк çитменлĕхсен сăлтавĕ те çаксем пулаççĕ: Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн ĕçĕсене йапăх организациленĕ, лапланса ларнă тата мăнаçланса кайнă, Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн работникĕсене тупса вырăналартассине пит йапăх йĕркеленĕ,—çавă ĕнтĕ сăтарçăсене Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн чылай оргăнĕсенче совета хирĕç преступленисем туса пыма майлă лару-тăру туса хунă.

3. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмне çаксене тума хушнă:

а) Халăх Комиссарĕсен Советне çак çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр хăйĕн 1937 çулхи ĕçĕсем çинчен тĕплĕ отчот тăратмала, отчотра совет ĕçĕн пур отрăçлисенче те ĕçсем мĕнле тăни çинчен татăклăн пĕлтермеле тата, кăтартнă йăнăшсем 1938 çулта пулассине сирме, ĕçре пулнă йăнăшсене кирлĕ пек тĕпчесе тухмала;

б) Халăх Комиссарĕсен Советне çак çулхи апрелĕн 15 мĕшĕнчен кайа йулмасăр, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕнче критиклесе каланисене хисепе илсе, Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн 1938 çулхи ĕçĕсен планне тăратмала, Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн оргăнĕсене çирĕплетес тесе, малашнехи ĕçре организацилĕх пултăр тесе туса иртермели ĕçсене палăртнине тăратмала;

в) Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн аппаратне унта кĕрсе кайнă шанчăксăр етемсенчен тасатмала.

(ТАСС).

Мускавра телевидени центрĕ пулать

Мускавра телевидени (тĕрлĕ йапаласене радио тăрăх инçене кăтартмалли) центр тăваççĕ. Вăл пирĕн çĕршывра пĕрремĕш пулать, халиччен ун пекки пулман-ха. Часах акă Мускавра пурăнакансем хăйсен хваттерĕсенчех, йатарласа лартнă аппарат-телевизор тăрăх, итлеме кăна мар, тата оперă, балет, драмă, концертсем, кино-фильмсем курма пултараççĕ.

Телевидени центрне темиçе çуртра вырнаçтарса лартаççĕ. Хальхи вăхăтра йатарласа тунă оборудованийе йĕркелесе çитереççĕ, ăна Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче туйанна.

Совет Сойузĕнчи çак пĕрремĕш телевидени центрĕ Мускавра тата ун çывăхĕнчи вырăнсенче кăтартма пултарать.

(ТАСС)

„Суд пригăвăрĕ—халăх пригăвăрĕ"

„Сойузкинохроникăн" Мускаври студийĕ „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕ çинчен йатарласа кинохроникă кăларать. Кинохроникă—„Суд пригăвăрĕ—халăх пригăвăрĕ" йатлă. Ăна ÿкерсе çитернĕ.

Фильма ССР Сойузĕн Ворховнăй Сучĕн Çар Коллегин ларăвĕсем вăхăтĕнче ÿкернĕ ÿкерчĕксем кĕнĕ. Вăл ларусенче Мускав ĕççыннисем, колхозниксем, Хĕрлĕ Çар представителĕсем, дипломатилĕ корпус чинĕсем, совет тата йутçĕршыв пичечĕн корреспонденчĕсем пулнă.

Пльонкă çине государствă йачĕпе айăплаканĕн, ССР Сойузĕн Прокурорĕ А. Й. Вышинский йулташăн сăмахне тата пригăвăра вуласа панине çырнă.

Фильмăн вĕçĕнчи кадрĕсем савăтсенчи, хапрăксенчи, колхозсенчи митингсене, вăл митингсенче ĕççыннисем ССР Сойузĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ троцкисла-бухаринла бандитсем пирки йышăннă пригăвăра ырласа саламланине кăтартаççĕ.

Фильмăн операторĕсем Б. Макаçейĕвпа И. Бельаков, монтажне режиççор И. Капалин тунă. Фильма çывăх вăхăтрах кăтартма пуçлаççĕ.

(ТАСС).

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Алекçей Макçимăвич Горький (1902 ç.). (Сойузфото).

Генилĕ художнике асăнни

Пĕтĕм çĕршыв вырăссен аслă писателĕ Алекçей Макçимăвич Горький çуралнă кунранпа 70 çул тултарнине паллă турĕ. Хапрăксемпе савăтсенче Горькин пурнăçĕпе творчĕстви çинчен калаçусем туса иртернĕ. Рабочисемпе работницăсем, Алекçей Макçимăвичпа хăй вăхăтĕнче унпа тĕл пулнисем, ун çинчен аса илсе сăмах тухса каланă. Вĕсен сăмахĕсем—совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блокри" совет халăхĕнчен унăн генийне уйăрса илнĕ фашисла çынвĕлеренсем çинчен каланă чухне—ылханупа тата курайманлăхпа тулли пулнă. Культурă дворецĕсенче, рабочисен клубĕсенче, аслă шкулсенче, шкулсенче, музейсенче, вулав çурчĕсенче, хĕрлĕ кĕтессенче тата библиотекăсенче литературă вечĕрĕсем пулса иртнĕ.

Мускаври А. М. Горький музейне мартăн 28-мĕшĕнче пин çын ытла екскурсантсем пырса курнă.

Мускаври пысăк предприйатисенче—Сталин йачĕпе тăракан автосавăтра, Куйбышĕв йачĕпе тăракан електрокомбинатра т. ыт. те кăнтăр канни вăхăтĕнче хаçатсенчĕ Горький çинчен çырнă материалсене тата „Мать", „В людях" произведенисен сыпăкĕсене вуланă.

Тбилиçире Грузи писателĕсен дворецĕнче Горькийе асăнса чаплă пуху туса иртернĕ. Илемлĕ сăмахăн аслă ăстаçин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен писательсемпе поетсем каланă.

Магнитогорскри металлургсен тĕп библиотеки тата хулари библиотекă Горький произведенисен тата ун çинчен çырнă литературăн выставкине уçнă. Магнитогорск комбиначĕн цехĕсенче тата рабочисен çурчĕсенче Алекçей Макçимăвич пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен калаçусем туса иртернĕ. Вăл калаçусенче 1200 çын пулнă. Хула библиотеки организациленĕ калаçура хула çыннисем пурĕ 500 çын пулнă. Драмă театрĕ вăл кун Горькин „Последние" пйесине кăтартнă.

Нумай халăхлă чаплă пухусем Кийĕвра, Хабаровскра, Минскра, Совет Сойузĕн ытти хулисенче те пулса иртнĕ.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Австрире „плебисцита" гитлĕрла иртерме хатĕрленеççĕ

Пуриншĕн те паллă Германи фашисĕсем апрелĕн 10-мĕшĕнче Австрире тата Германире „плебисцит" (пĕтĕм халăхран ыйтса пĕлни) туса иртерме палăртнă. Вăл, фашиссен шучĕпе, çав асăннă çĕршывсенчи, пуринчен ытла Австрири халăхсем Германи ăна хĕçпăшалпа туртса илни çине тата Австрине вăйпа ирĕксĕрлесе Германи çумне пĕрлештерни çине мĕнле пăхнине кăтартса памала. Çак „плебисцита" туса иртернипе пĕрлех фашиссем тата Германи рейхстагĕн „суйлавĕсене" те иртереççĕ. Тĕпрен илсен, „плебисцит" та, „суйлавсем" те фашисăм условисенче комеди çеç пулса тăраççĕ, çав суйлавсене „гитлĕровцăсем „халăх" ирĕкне палăртса пани", тесе калаççĕ.

Кирлĕ результатсем тăвас тесе фашиссем халех те ĕнтĕ Австрире çавна май хатĕрлÿ ĕçне туса пыраççĕ. Вĕсем ку тĕлĕшпе хăйсен йаланхи ĕç метăчĕсемпе—террор, халăхсене улталас тата фашисла демагоги метăчĕсемпе ĕçлеççĕ. Учреждениссемпе предприйатисенче каçса кайсах „тасатусем" тăваççĕ. Йеврейсене тата фашисăма хирĕç тăракан рабочисене ĕçрен кăларса йараççĕ. Вĕсене „плебисцит" туса иртернĕ çĕре хутшăнтармаççĕ. Пĕтĕм Австри тăрăх тăтăшах массăлă арĕссем пулса пыраççĕ. Фашисăма хирĕç тăракансене вуншар пин çын арĕсленĕ. Австрири тĕрмесемпе концентрацилĕ лагĕрсем йăлтах тулса ларнă пирки, арĕсленисенчен нумайĕшне Германири концентрацилĕ лагĕрсене куçараççĕ. Кирлĕ пек „техникăлă хатĕрленÿсем" те туса пыраççĕ. Австрин тĕрлĕрен районĕсене йатарласах уполномочĕннăйсем—лайăх тĕрĕсленĕ гитлĕрăвĕцсем йараççĕ, вĕсене Германин Австрине пынă захватчикĕсенчен суйласа илеççĕ. „Плебисцита" хутшăнма ирĕк панă çынсене виçĕ категорине уйăрнă: Германи гражданинĕ пулса тăракан нимĕçсем, ĕлĕк Австри гражданинĕ пулнă çынсем тата австрийецсем. Вăл категорисенчен кашнийех уйрăм тĕслĕ листоксем илеççĕ. Ĕлĕк Австри гражданинĕ пулнă, халь Германире пурăнакан çынсем валльи сасăламашкăн йатарласах уйрăм çуртсем уйăрса хураççĕ.

Германи захватчикĕсем „суйлав умĕн çĕкленÿ" пур пек кăтартма хăтланса тем пекех тăрăшаççĕ пулсан та, вĕсен çакна ирĕксĕрех йышăнмала пулнă: Венăра тата пĕтĕм Австрире лару-тăру пит çивчĕ. Гитлĕрăвĕцсем пур çĕрте те Австри халăхне çаратаççĕ, çынсене хăйсен ирĕкĕпе арĕслеççĕ. „Хăйсене хăйсем вĕлерне" тесе пĕлтерекен нумай çынсене, чăннипе гитлĕрăвĕцсем вĕлернĕ.

Халиччен Австрире анлăн сарăлнă йут çĕршыв хаçачĕсем халь йăлтах çухалнă. Йут çĕршывсен чылай корреспонденчĕсем Австрирен тухса тарнă, çавăнпа Австрири чăн-чăн лару-тăрува йут çĕршывсен хаçачĕсенче çутатса пыма пит те йăвăр.

Тĕнчери пичет тата обществĕннăç „плебисцит" мĕнпе вĕçленесси пирки нимĕн те иккĕленмеççĕ: унăн результачĕсем Австри халăхĕн—Германи захватчикĕсем вăйпах пусмăрласа илнĕ халăхăн чăн-чăн шухăш-кăмăлĕсене нимĕн чухлĕ те кăтартса парас çук, тесе çыраççĕ.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Шаньдун провинцинче, Таньцзинь-Пукоу чу кунçулĕн çурçĕр участкинчи фронтра, Китай çарĕсем пĕтĕм фронт тăрăх наступлени туса пыраççĕ.

Çав фронт ăн вăтаçĕрĕнчи участкинче Китай çарĕсем пысăк çĕнтерÿ тунă. Вĕсем Йапонин Исогаи йертсе пыракан 20 пин çынлă дивизине татăклăн çĕнтернĕ. Китай çарĕсем йапонецсенчен вăрçă ĕçĕсем йенчен пысăк вырăнта тăракан Линьчен тата Цзинин йатлă хуласене тата ытти пунктсене те чылай туртса илнĕ. Йапони çарĕсем хĕвелтухăç йенеле кайала чакаççĕ, мĕншĕн тесен чукунçул тăрăхĕнче йапонецсене Китайăн пысăк отрйачĕсем картласа тăраççĕ.

Фронтран пĕлтернĕ тăрăх, Китай çарĕсем халĕ те наступлени туса пыраççĕ.

Шаньси провинцинче те Китай çарĕсем активлăн вăрçаççĕ, вĕсем кунта чылай пунктсене йышăннă.

Вăтам китайра Китай çарĕсем йапонецсене Гуанде тата Дайбу йатлă хуласенчен хăваласа кăларса йанă.

Йапонин 50 самольотĕ мартăн 27-мĕшĕнче Ханькоупа Учан çине бомбăсем пăрахнă. (ТАСС.)

Йулашки хыпарсем

Германи Австрире тăвакан вăрçă ĕçĕсем

Германин авиаци министрĕ Геринг Венă хулине пынă. Вăл йертсе пынипе çĕнĕ вăрçăна хатĕрленмели фашисла тăватăçуллăх плана пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Геринг Австри валльи хатĕрленĕ „Хуçалăх программине" пичетлесе кăларнă. Вăл „программăн" тĕп шухăшĕ çапла: Австри халăхĕн фашисла Германи вăрçа хатĕрленнипе çыхăннă пысăк расхутсене хăй çине илмеле, Австри хăй Германин çĕнĕ çар бази пулса тăрать.

Герингăн „Хуçалăх программи" тăрăх, Австрире васкасах аэродромсем тата çар предприйатийĕсене тума тытăнмала, вĕсене валльи сырйо запасĕсене тумала. Çавăн пекех стратегилĕ çулсем тума та тата химипе целлюлозă промышлĕннăçне васкасах аслăлатма тытăнмала.

(ТАСС).

Парти пурнӑҫӗ

Йӑнӑшсене вӗҫне ҫити тӳрлетмеле

(Коммуниссен пухӑвӗнчен)

ЙӖПРЕҪ. Мартӑн 22-мӗшӗнче коммуниссен районри пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура ПСК(б)П Тӗпкомӗн йанвар уйӑхӗнчи пулса иртнӗ Пленумӗн решенисене сӳтсе-йаврӗҫ.

Коммуниссем Пленум решенине хастарлан сӳтсе-йаврӗҫ, пренире активлӑн тухса калаҫрӗҫ. Тухса калаҫакансем партин пуҫламӗш организацисем те, парти райкомӗ те коммуниссене партирен кӑларасси пирки чӑтма ҫук иртӗнсе кайнине палӑртрӗҫ.

Хӑшпӗр пуҫламӗш организацисемпе вӗсен руководителӗсем уйрӑм парти членӗсен кунҫулӗ ҫине формаллӑ, чунсӑр бюрократла пӑхнӑ. Парти организацисем нимӗн тӗрӗслемесӗрех, тӗплӗ сӑлтавсемсӗр коммуниссене партирен кӑларнӑ, вӗсене ӗҫсӗр тӑратса хӑварнӑ.

Акӑ, парти райкомӗн иккӗмӗш ҫекретарӗ пулнӑ Боровков йулташа, коммуниссен районри пухӑвӗнче „халӑх тӑшманӗ" Захарӑвпа ҫыхӑну тытнӑ тесе, ӗҫрен кӑлармала решени йышӑннӑ. Вӑл решенине парти райкомӗ пурнӑҫа кӗртнӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн вара Боровков пӗр уйӑх хушши ӗҫсӗр пурӑннӑ.

Варманпромхоз ҫумӗнчи пуҫламӗш парторганизацинче вӑрманпромхоз директорне Солдатӑва, тата тепӗр пуҫламӗш организацинче прокурор Милиндейӗва халӑх тӑшманӗсем вырӑнне шутласа партирен кӑларнӑ. Парти Контролӗ Комиҫҫин Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйӗ Солдатӑвпа Милиндейӗвӑн ӗҫӗсене пӑхнӑ хыҫҫӑн, вӗсен тӑшманла ӗҫ пулнине тупман, вӗсене парти членӗнчех хӑвармала тунӑ.

Райӗҫтӑвком ҫумӗнчи пуҫламӗш парти организаци коммуниссене партирен кӑларас пирки чӑтма ҫук иртӗнӳлӗ хӑтланнӑ. Райӗҫтӑвком председателӗ Захарӑва коммуниссен пухӑвне ирӗксӗр илсе пырса партирен кӑларнӑ, ӑна халӑх тӑшманӗ вырӑнне шутласа парти райкомӗ арӗслеттернӗ. Ҫак парти организацинчех сывлӑх пайӗн пуҫлӑхӗ пулнӑ Громӑва халӑх тӑшманӗ йатне парса, ӗҫрен кӑларма йышӑннӑ, партирен кӑларма ыйту лартнӑ. Громӑва ӗҫрен кӑларсан вӑл чылай вӑхӑт хушши ӗҫсӗр пурӑннӑ. Ҫавӑн пекех Рыжов йулташа халӑх тӑшманӗ тесе йат панӑ, ӗҫрен кӑларнӑ. Тӗплӗн тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, Рыжовӑн нимӗнле тӑшманла ӗҫӗ те палӑрман.

Ҫавӑн пек йӑнӑшсене тӳрлетсе ҫитерме вӑхӑт ҫитнӗ. Пуху коммуниссене партирен кӑларас ӗҫре пулнӑ йӑнӑшсене тӳрлетес тӗлӗшпе парти райкомӗпе пуҫламӗш организацисем пачах та ҫителӗксӗр ӗҫлесе пынине палӑртрӗ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмӑнах районри „Колхоз пурнӑҫӗ" хаҫат редакцине хытӑ критиклерӗҫ. „Колхоз пурнӑҫӗ" хаҫат парторганизацисене халӑх тӑшманӗсенчен тасатас ыйту ҫине тӗплӗн пӑхман. Чылай коммуниссене, вӗсен ӗҫне тӗплӗн тӗрӗслемесӗрех, халӑх тӑшманӗ йатне парса, елеклӗ статйасем пичетлесе пынӑ.

Парти Тӗпкомӗн Пленумӗ решени йышӑннӑ хыҫҫӑн та „Колхоз пурнӑҫӗ" йӑнӑшсене тӳрлетес тесе нимӗн те туман. Уйрӑм карйериссене, елекҫӗсене уҫса палӑртса тӑрӑ шыв ҫине туртса кӑларман.

Пленум решенине пурнӑҫлас тӗлӗшпе комсомолпа профсойуз организацисем ытла та сӳрӗккӗн ӗҫлеҫҫӗ. Комсомол райкомӗ йӑнӑшсене тӳрлетес тесе нимӗнле ӗҫсем туни те курӑнмаст-ха.

Коммуниссен районри пухӑвӗ пленум решенине пурнӑҫа кӗртесси партин пуҫламӗш организацисемпе вӗсен руководителӗсемпӗн, кашни комунисӑн ответлӑ та политикӑллӑ задачӑ пулса тӑнине хытӑ астутарса хӑварчӗ.

Дм. Михайлӑв.

Комсомол активӗн районри пухӑвӗ

Канаш районӗнчи комсомол организацийӗн ретӗсене хӗсӗнсе кӗнӗ тӑшмансенчен, йурӑхсӑр ҫынсенчен тасалас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ тунӑ. Анчах ҫав вӑхӑтрах ӗҫре йӑнӑшсем те сахал мар пулнӑ. Организацире пулнӑ карйериссем, хӑйсем сисӗмлӗ пулнӑ пек кӑтартас шутпа, комсомолӗҫсене вунӑшарӑн комсомол ретӗнчен кӑларнӑ, ҫав тӗслӗхсене районри комсомол активӗн мартӑн 22-мӗшӗнче пулса иртнӗ канашлӑвӗ те лайӑх кӑтартса пачӗ.

Нуринчен ытла комсомол райкомӗн бюровӗ йӑнӑшсем тунӑ. Акӑ, комсомол райком пленумӗн тата бюро членӗ пулнӑ Вахрутдинӑвӑ ӗҫне илер. Ӑна „троцкист Лазарӗвпа ҫыхӑну тытнӑ, политикӑ тӗлӗшӗнчен сисӗмсӗр" тесе, пленумпа бюро составӗнчен тата комсомолтан та кӑларса пӑрахнӑ. Тӗрӗссипе илсен Вахрутдинӑвӑн Лазарӗвпа нимле ҫыхӑну тытни те пулман. Ҫак йӑнӑша ПСҪЛКС Обкомӗ хутшӑннӑ хыҫҫӑн тин тӳрлетнӗ. Вахрутдинӑвӑ йулташа комсомолра хӑварнӑ. Ҫавнашкалах чукунҫул ҫинчи туллимар вӑтам шкулӑн директорӗ пулнӑ Муравйова „учителсене ӗҫе илнӗ чухне сисӗмлӗ пулман, ӗҫет," тесе комсомол ретӗнчен кӑларса райком бюровӗ пысӑк йӑнӑш тунӑ. Ҫак йӑнӑша та райкомол ПСҪЛКС Обкомӗ хутшӑнсан тин тӳрлетнӗ. Муравйова комсомол ретне кайала илнӗ.

Комсомол райком пленумӗн тата бюровӗн хӑшпӗр членӗсем Парти Тӗпкомӗпе комсомол Тӗпкомӗн решенисене пурнӑҫа кӗртес ҫӗрте пуҫламӗш организацисене пулӑшса, вӗрентсе пырас вырӑнне, хӑйсем йӑнӑшсем тунӑ. Акӑ, райкомол бюровӗн членӗ Р. Ҫмирнов финанс техникумӗнче комсомолӗҫсен пухӑвне иртернӗ чух: „Зайцӗв, Шигалӑв, Копылов комсомолӗҫсене обйазательнӑ комсомолтан кӑлармала" тенӗ. Комсомолӗҫсен пухӑвӗ, Ҫмирнова итлесе, вӗсене пурне те комсомол ретӗнчен кӑларса пӑрахнӑ. Аччари комсомол пуҫламӗш организацийӗ пӗр пухура 3 ҫынна выгӑвӑр панӑ. Протоколне ҫирӗплетме тӑратсан, райкомол бюровӗ виҫҫӗшне те комсомолтан кӑларнӑ. Ҫапла вара Ервуҫ Наталине, П. Иванова, Андрейӗва, ӗҫке йарӑннӑ, член укҫи вӑхӑтра тӳлемеҫҫӗ, дисциплинӑ тӗлӗшӗнчен пӑсӑлнӑ тесе хӑйсемсӗрех комсомолран кӑларса ывӑтнӑ. Ҫав вӑхӑтрах комсомол райкомӗ вӗсен йӑнӑшӗсене тӳрлетесси ҫинчен, вӗсене воспитани парасси ҫинчен маннӑ. Ӗҫе тепӗр хут пӑхса тухсан, вӗсене пурне те комсомол ретӗнчех хӑвармала тунӑ. Райкомол бюровӗ хӑшпӗр ларусенче комсомолӗҫсене пачки-пачкипе комсомол ретӗнчен кӑларнӑ. Акӑ, райкомол бюровӗн 1937 ҫулхи октйабӗрӗн 9-мӗшӗнче пулнӑ ларӑвӗ 8 ҫынна комсомолтан кӑларма йышӑннӑ, вӗсенчен 2-шне пачах тӗрӗс мар кӑларнӑ пулнӑ. Районри комсомол организацин конференцийӗ пулса иртнӗ хыҫҫӑн 45 ҫынна комсомолтан кӑларнӑ. Вӗсенчен 18 ҫынна тӗрӗс мар кӑларнӑ, ӗҫе тепӗр хут пӑхса тухса, комсомол ретӗнчех хӑварма тивнӗ. Комсомол райкомӗ халӗ те комсомолтан кӑларнисен 11 апеллйацине пӑхса тухман.

Комсомолӑн чылай пуҫламӗш организацисем воҫпитани ӗҫне манса кайса, пӗчӗк сӑлтавсемпех комсомол ретӗнчен кӑларса пӑрахаҫҫӗ. Акӑ, Йаманкассинчи комсомол комитечӗ П. Ваҫилйӗва пухӑва йӗркелӗ ҫӳременшӗн комсомолтан кӑларнӑ. Ҫав вӑхӑтрах пуҫламӗш организаци пуху кунӗсем ҫинчен вӑхӑтра пӗлтермен, лайӑх хатӗрленмен, пухусене ҫамрӑксене политикӑлла воҫпитани паракан шкул туса хурасси ҫинчен манса кайнӑ.

Кунашкал ҫитменлӗхсем нумай пуҫламӗш организацисенче пулнӑ. Районри комсомол активӗн канашлӑвӗ ҫав ҫитменлӗхсемпе йӑнӑшсене палӑртса, вӗсене пӗтересси ҫинчен татӑклӑ решени йышӑнса хӑварчӗ.

Ив. Малов.

Кружоксем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ

Асӑлӑ Ӑстакассинчи (Сӗнтӗрвӑрри р.) „Лесоруб" вӑрман алӑсталӑх ертелӗнче комсомол организаци пуҫарнипе тӗрлӗрен кружоксем организациленӗ. Ертелре драмкружок, техникӑпа вӗренмелли кружок т. ыт. те пур. Драмкружокра 25 ҫын. Кружока Аннӑ Корнилӑвӑ учителницӑ йертсе пырать. Кружок членӗсем спектаклӗ лартса пама кӳршӗри йалсене те ҫӳреҫҫӗ.

Техникӑ кружокне Мартынӑв йулташ йертсе пырать. Вӑл вӑрман ӗҫне тӗплӗн пӗлет. Ҫавӑнпа та вӑл иртерекен занйатисем интереслӗ пулаҫҫӗ, кружок членӗсем занйатисене йӗркелӗ ҫӳреҫҫӗ.

Физкултурӑ кружокӗнче 23 ҫын. Ку кружок чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ.

„Лесоруб" ертелри физкултурниксем таврари йалсенчи физкултурӑ кружокӗсене те пулӑшаҫҫӗ. Камайӗвӑ йалне кайса физкултурӑ кружокӗ тунӑ, Турханкасси йалӗнчи физкултурӑ кружокне пулӑшнӑ.

ГТО значокӗн хӗллехи нормисене 20 ҫын панӑ. Ертел ҫумӗнче тата струннӑй оркестр, ПВХО кружокӗсем пур. Вӗсем те йӗркелӗ ӗҫлеҫҫӗ.

Пр. Сатур.

Профсойуз ӗҫӗнчи хӑш-пӗр ҫитменлӗхсем

ССР Сойузӗн Верховнӑй Советне суйланӑ вӑхӑтра ӗҫҫыннисем Ленин—Сталин партине парӑнса ӗҫленине, хӑйсен тӑван ҫӗршывне чӗререн йуратнине кӑтартрӗҫ. Иртнӗ суйлавра коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗ ҫӗнтерчӗ.

Ҫак ҫӗнтерӳшӗн партипе совет организацисемпе пӗрлех профсойуз организацисем те чылай ӗҫленӗ. Округри тата участкӑри суйлав комиҫҫи членӗсем шутӗнче государствӑ учрежденисенче ӗҫлекенсен профсойузӗн членӗсем 450 ҫын пулнӑ. Вӗсенчен чылайӑшӗ агитаципе пропагандӑ ӗҫне йӗркелеме пултарнине, организацилӗ ӗҫсене ӑнӑҫлӑн тума пултарнине кӑтартрӗҫ. Хӑйсен пултарулӑхне кӑтартнӑ ҫынсене аслӑрах ӗҫе чылай куҫарнӑ. Акӑ, Шликанӑва—Вӑрнар районӗнчи Ҫӗрпуйел йалсовет председателӗ пулнӑскер, райӗҫтӑвком ҫекретарне лартнӑ. Йӗпреҫ районӗнчи Хирти Мӑрат йалсовет председателне—Комиссарӑва тата Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Хоршеваш йалсовет председателне—Ваҫилйӗва кадӑрсен ҫектӑр пуҫлӑхне ӗҫлеме лартнӑ.

ССР Сойузӗн Верховнӑй Советне суйланӑ чухнехи хӑшпӗр ӗҫсенче ҫитменлӗхсем те пулнӑ. Чылай йалсоветсем суйлавҫӑсен спискисене тӗрӗс туман, суйлавҫӑсен хушамачӗсене пӑсса пӗтерни, адрӗссене пӑтраштарса пӗтерни темӗн чухлех пулнӑ. Хӑшпӗр районсенче, сӑмахран, Турхан, Сӗнтӗрвӑрри районӗсенче суйлавҫӑсен спискине чӗлхесӗр тата суккӑр ҫынсене кӗртмесӗр хӑварнисем те пулкаланӑ. Ҫак фактӑсем вӗсем—Сталинла Конституцине, суйлав саккунне пӑсни пулать. Вӑл ҫитменлӗхсем ҫитес суйлавсенче те—РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйланӑ чухне те пулма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа та профсойуз организацийӗсен хӑйсен ҫемйисенче, массӑ хушшинче суйлав саккунӗ ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса парас пулать. Уйрӑмӑнах ку тӗлӗшпе государствӑ учрежденисенче ӗҫлекенсен профсойузӗн членӗсем хастар ӗҫлени кирлӗ.

Совет служащийӗ — государствӑ учрежденийӗсенчи работниксен ӗҫӗ хисеплӗ те ответлӑ. Государствӑ учрежденисенче ӗҫлекен ҫынсем кашнийех нумай колхозниксемпе, йединоличниксемпе, ӗҫҫыннисемпе ӗҫ тӑваҫҫӗ—вӗсене йышӑнаҫҫӗ, калаҫаҫҫӗ, вырӑнсенчен килнӗ ҫынсен ыйтӑвӗсене татса параҫҫӗ. Пысӑк ӗҫ, хисеплӗ ӗҫ тӑваҫҫӗ государствӑ учрежденисенче ӗҫлекенсем. Ҫавӑнпа та государствӑ учрежденисенче ӗҫлекенсен профсойуз организацийӗсен хӑйсен членӗсен пӗлӳлӗхне, ӗҫ квалификацине, културлӑхне ӳстерессишӗн тӑрӑшмала, профсойузра тӑман работниксене профсойуз ретне хутшӑнтармала.

Анчах ҫакна пур районра та кирлӗ пек ӑнланса илмен-ха. Пирӗн республикӑра халӗ государствӑ учрежденийӗсенче ӗҫлекенсенчен профсойуз организацинче 85 проценчӗ ҫеҫ шутланаҫҫӗ. Уйрӑмӑнах Патӑрйел, Шупашкар, Ҫӗрпӳ, Трак, Пӑрачкав тата Ҫӗмӗрле районӗсем кайа йулаҫҫӗ. Вӑл районсенче государствӑ учрежденисенче ӗҫлекенсенчен 60—70 проценчӗ ҫеҫ профсойуз организацинче тӑраҫҫӗ.

Йанвар-феврал уйӑхӗсенче государствӑ учрежденисенчи работниксен сойузӗн вырӑнти комитечӗсем профсойуз членӗсем умӗнче отчотсем турӗҫ. Вӗсен ӗҫӗнче чылай ҫитменлӗхсем пурри палӑрчӗ. Уйрӑмӑнах государствӑ учрежденисенче ӗҫлекенсен профсойуз организацисенче политикӑлла воспитани ӗҫне тивӗҫлипе йӗркелени ҫук-ха. Райӗҫтӑвком руководителӗсем райком ҫумӗнчи кружоксенче вӗренеҫҫӗ. Рйадовой работниксене нумайӑшне нимӗнле кружока та хутшӑнтарман. Ҫакна епӗр Йӗпреҫ, Ҫӗмӗрле, Елӗк тата Хӗрлӗ Чутай районӗсенче куратпӑр. Чылай вырӑнти комитетсенче производствӑлла канашлусенче социалисӑмла ӑмӑрту ыйтӑвӗсем ҫинчен сӳтсе-йавма пӑрахнӑ. Ҫӗмӗрле районӗнче вырӑнти комитета суйланӑранпа та райӗҫтӑвкомра производствӑ дисциплинине йӗркелес тата ытти ӗҫсем тӑрӑх пӗре те пухӑнса калаҫман. Кунта социалисӑмла ӑмӑрту договӑрӗсем те, тунӑ ӗҫсене кӑтартакан хӑмасем те ҫук.

ПСК(б)П Тӗпкомӗн йанвар уйӑхӗнче пулнӑ пленумӗн йышӑнӑвӗнче кӑтартнӑ йӑнӑшсене тӳрлетес тӗлӗшпе государствӑ учрежденисенче ӗҫлекенсен профсойуз организацисенче ӗҫ вӑраххӑн пулса пырать. Йӑнӑшсем туни чылай пулнӑ. Акӑ, тӗслӗхрен: Ҫӗрпӳ Хула совечӗ статистик-счетовода Генералӑв йулташа ӗҫрен кӑларнӑ. Сӑлтавӗ—кӗрӳшне арӗслени. Государствӑ учрежденисенче ӗҫлекенсен сойузӗн районри комитечӗ хула совет йышӑнӑвне тишкерсе тӗрӗслес вырӑнне „тӗрӗс кӑларнӑ", тесе ырланӑ.

Шупашкар райӗҫтӑвкомӗн уборщици Андрейӗвӑ профсойуза кӗме зайавлени панӑ. Пухура ун ҫинчен елеклесе пӗтернӗ: вӑл райӗҫтӑвкомра ӗҫленӗ Захарӑвпа (ӑна арӗсленӗ) ҫыхӑну тытнӑ, тесе профсойуза илмесӗр тӑнӑ. „Ҫыхӑну тытни" ҫакӑ кӑна, Андрейӗвӑ пуҫлӑхӗ Захарӑв пулнӑ.

Тутаркас районӗнче государствӑ учрежденисенче ӗҫлекенсен сойузӗн районри комитечӗ пӗр ларурах тивӗҫлӗ сӑлтавсӑр 10 ҫынна профсойуз членӗнчен кӑларнӑ. Тӳрлетни курӑнмаст-ха. Йӑнӑшсене хӑвӑрт тӳрлетни кирлӗ.

АСТАФИЕВ.

Куславкка комбинатӗнчи стахановӗцсен ҫурчӗ.

Цыганов фото-ӳкерчӗкӗ.

Халӑх переписне хатӗрленетпӗр

ШӐНКАРТАМ. 1939 ҫулти йанвар уйӑхӗнче Пӗтӗм Сойузри халӑх переписӗ пулать. Районри халӑх хуҫалӑх учочӗн ты[...] тӑмӗ ҫак переписе иртерме хатӗрлен[...] тытӑнчӗ, Переписе хатӗрленес шут[...] йалсовет ҫекретарӗсен районри канаш[...] лӑвӗ пулчӗ. Канашлура районри хала[...] хуҫалӑх учочӗн тытӑмӗн инспекторӗ Седаков йулташ Пӗтӗм Сойузри хала[...] переписӗн задачисем ҫинчен доклад [...] пачӗ. Доклад хыҫҫӑн канашлӑва пуха[...] нисем чылайӗшӗ тухса калаҫрӗҫ.

Районри инспекторсен участкисем п[...] реписе лайӑх хатӗрлес тӗлӗшпе пур[...] пӗр пӗрипе ӑмӑртӑва тухрӗҫ.

П. Федӑрӑв.

Финанс ҫекцийӗ ӑнлантару ӗҫне туса пымасть

Ухман йалсовечӗ (Шӑхасан р.) [...] ҫулсенче укҫа-тенкӗ пухас ӗҫре ма[...] пынӑ. Кӑҫал финанс ҫекцийӗ массӑл[...] ӑнлантару ӗҫне йӗркелемен, ҫавӑн[...] йалсовечӗ укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗш[...] таврари йалсоветсенчен кайа йулса пы[...] рать. Ҫекци руководителӗ Илларион [...] кавлӗв укҫа-тенкӗ пухас ыйтупа колхо[...] никсемпе йединоличниксене ӑнлантар[...] памасть.

Йалсоветри „Победа" колхоз „ССР Со[...] йуз оборонине тӗреклетмели займ" укҫи[...] не начар пухать. Колхозӗпе 4525 тенк[...] займ укҫи пухмала, мартӑн 25-мӗш[...] 900 тенкӗ ҫеҫ пухнӑ.

Колхозра займ уполномоченнӑйӗсе[...] пулса ӗҫлеме уй-хир бригадирӗсене уйӑ[...] нӑ. Анчах кунта бригадирсенчен пӗри [...] хӑйсене хушнӑ ӗҫе пурнӑҫлама тытӑн[...] ман. Вӗсен аллинче займ кам мӗн чух[...] лӗ ҫырӑннине кӑтартакан спискӑсем [...] ҫук.

Йединоличниксенчен чылайӗшӗ йалху[...] ҫалӑх налогӗ, културсбор укҫисене ирти[...] ҫулшӑн тӳлесе татман. Займ укҫи пу[...] хас ыйтупа йединоличниксене пухусем[...] ӑнлантарса пани пӗре те пулман.

Цветков.

Квартӑл планне иртерсе тултарчӗҫ

ЕЛӖК. Йунтапа йалсоветне кӗ[...] рекен колхозсенче ҫӳрекен Лан[...] дышӗв почталйон хаҫат-журна[...] сарас плана кашни квартӑлта[...] тултарса пырать. Ҫырӑннӑ хаҫат[...] журналсене подписчиксем пат[...] вӑхӑтра ҫитерет. Лайӑх ӗҫленӗше[...] ӑна сойузпичетӗн район[...] уйрӑмӗ темиҫе хут та премилен[...]

Районран панӑ план тӑрӑх ун[...] I-мӗш квартӑлта 1770 тенкӗлӗх х[...] ҫат-журнал сармалла пулнӑ пулса[...] вӑл 3296 тенкӗлӗх сарса кварта[...] планне иртерсе тултарнӑ. Ҫап[...] кунта 354 хуҫалӑх 370 екземплйа[...] тӗрлӗрен хаҫат-журнал ҫырӑнс[...] илеҫҫӗ.

Ҫураки вӑхӑтӗнче култмассӑл[...] ӗҫе анлӑн сарас тесе йалсовет[...] културӑ ҫекцийӗ ӗҫ планӗ тур[...] Халӗ агитаторсене уйӑрнӑ, ка[...] колхозрах витринӑсем туса хатӗр[...] ленӗ.

Ҫавӑн пекех 1-мӗш квартӑлт[...] хаҫат-журнал сарас плана Асака[...] ри Пантелеймӑнӑв почталйон 11[...] процент, Йефремкассинчи Миха[...] лӑв—119 процент тултарнӑ.

В. Йефремӑ[...]

Чӑвашла тӗрӗс ҫырасси ҫинчен

(Орфографипе терминологи ыйтӑвӗсем тавра сӑмах хускатнӑ май)

Ҫак кунсенче Чӑвашиздат „Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйламали Положенине" пичетлесе кӑларчӗ. Ҫав кӗнекере пӗр вырӑнта **„председател", „секретар" „Андерейӗвӑ", „Василйӗв"** тесе ҫырнӑ. ҫав сӑмахсенех урӑх страницӑсенче **„ҫекретар, Андреева"** т. ыт. тенӗ. **„Пухувӗ", „ларувӗ"** тесе пынӑ хушӑрах **пӗрлешӗвӗ, ыйтӑвӗ"** тенӗ вырӑнсене те тӗл пулатӑн.

Хӑшпӗр кӗнекесем ҫинче **„обйазателнӑ, обйазателнӑ, обйазателнӑ"** тенисене курма пулать.

Хаҫатсене илсессӗн, вӗсенче ун йышши пӑтраштарусем тата ытларах. Пӗр № хаҫатрах **стахановӗц—стахановцӑ** тесе ҫыраҫҫӗ, йе **Журавлйов—Журавлев, жалӑбӑсем — жалобӑсем, Варшавӑра, Кренкел йе Кренкелӗ, Кремлӗ, сейӑлкӑ, ҫуршер, пӗлӗвне, пӗлӳвне, ӗҫлетчӗ—тӑратаччӗ** тата ыттисем те.

Пӗр вӑхӑтра „Чӑваш Коммунӗ" ҫине **„отв. радактор заместителӗ"**, „Ҫамрӑк болшевик" ҫине **„ответ. редактӑр заместителӗ"** алӑ пусатчӗҫ. „Ҫамрӑк болшевик" ҫине вӑл вӑхӑтра пӗр вырӑнта **„Вӑрман ӗҫ техникумӗнче"** тесе ҫырнӑччӗ (сӑмахсене уйӑрса), ҫавӑнтах, 6 йӗрке айаларахра, **„Вӑрманӗҫ рабфакӗ"** тесе хунӑ. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесессӗн кунта сӑмах ик шкул ҫинчен пырать, тет вара кун пеккисем ҫинчен пирӗн „Капкӑн" журнал. Пӗр шкулӗ Сӗнтӗрвӑрринче, тепри Улатӑрта; кашнине хӑйне уйрӑм правописани кирлӗ иккен!

Ҫӗмӗрлери предприйатире ӗҫлекен рабочийе **стахановцӑ** теҫҫӗ, урӑх ҫӗрти предприйатинче вара **стахановӗц** темеле пек килсе тухать.

Кашни хаҫатӑн, йе кашни кӗнеке редакторӗн хӑйне уйрӑм орфографи, уйрӑм терминологи пулса кайа пуҫланӑ пек те туйӑнать тепӗр чухне.

Примерсем питех те нумай, вӗсене урӑх кӑтартса тӑма кирлӗ те мар. Пичетленсе тухнӑ кӗнекесемпе хаҫатсене тинкеререх вуласа тухмала ҫеҫ.

Мӗнрен килет ку? Паллах, пичетре ӗҫлекенсем хушшинче чӗлхе тӗлӗшпе кулленех мӗнле те пулин фокус шухӑшласа кӑларма йуратакансем пуррипчен мар, урӑххинчен килет вӑл. Пирӗн кӗнеке-хаҫатсенче корректурӑ йӑнӑшӗсем пурри паллӑ. Епӗр, кӗнеке-хаҫат кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекенсем, чӗлхене ҫителӗклӗ пӗлменни, правилӑсене тӗплӗн вӗренменни тата пӗр ҫуртра ӗҫлетпӗр пулин те, пӗр-пӗрипе калаҫса татӑлайманни те пур-ха. Анчах ку ӗҫре тата пысӑкрах сӑлтавсем те пур.

Пирӗн пурнӑҫ пысӑк утӑмсемпе, ҫӗнтерӳлӗн малала кайса пынӑ май, чӗлхе те пуйанланса, малала кайса пырать. Халиччен етемлӗх курман-илтмен хастарлӑхпа та пысӑк хӑвӑртлӑхпа Ленинпа Сталин йалавӗ айӗнче социалисӑмлӑ ҫӗршывӑн промышлӗннӑҫӗ, йалхуҫалӑхӗ, култури малала ҫӗкленсе гигантла утӑмсем тӑваҫҫӗ. Ҫӗнӗ общӗствӑллӑ отношенисем, ҫӗнӗ техникӑ ҫӗнтерӗвӗсем т. ыт. кулленхи хӗрӳ ӗҫре чӑваш чӗлхине вырӑс чӗлхийӗ урлӑ ҫӗнӗ интернационаллӑ терминсем кӗртсе пыраҫҫӗ. Ҫӗнӗ сӑмахсем, общӗствӑпа политикӑ, индустри терминӗсем пирӗн кулленхи пурнӑҫа кӗрсе тӑванласа пыраҫҫӗ. Чӗлхе ҫавӑн пек терминсемпе пуйанланса, ӳссе пынӑ май, паллах, чӗлхе саккунӗсенче те улшӑнусем пулма пултараҫҫӗ. Ун пек улшӑнусем халӗ сахал мар. Вӑл улшӑнусене ҫителӗклӗ таран тӗпчесе палӑртман, пирӗн чӗлхе йӗнӗпе справӑчнӑй изданисем ҫукпа пӗрех т. ыт. те. Чӗлхе ҫӗнӗ материалсемпе пуйанланса пыни пирӗн кӗнеке-хаҫатсем ҫинче сисӗнетех.

Кулленех тата кам мӗнле пӗлнӗ йе мӗнле тӑвас тенӗ ҫапла улшӑнусем кӗртме кирлӗ марри паллӑ. Орфографипе терминологийе кулленех улӑштарса пыни халӑха вӗрентес ӗҫе питӗ кансӗрлеме пултарать. Анчах чӑвашла тӗрӗс ҫырмали правилӑсене халӗ улшӑнусем кӗртме кирли те курӑнсах тӑрать.

Чӗлхе тӗлӗшпе ӗҫлекен работниксен, преподавателсен, кӗнеке-хаҫат кӑларакансен кун пирки тӗплӗнрех калаҫса татӑлас пулать. Ҫӗнетӳсемпе улшӑнусем кӗртес умӗн, вӗсем ҫинчен тӗплӗн шухӑшласа пӑхмала, наукӑ йӗнӗпе никӗслесе, вӑл ыйтусене пурте ӑнланмала, тӗплӗн татса парас пулать. Марксисӑм классикӗсем Маркс, Енгелс, Ленин, Сталин чӗлхепе литературӑ тата искусствӑ ҫинчен каланисене тата грамматикӑна лайӑх вӗренсе пырса, пирӗн ҫав ыйтусене тӗрӗс татса памала.

Илер акӑ, сӑмахран, епӗр халӗ йулашки вӑхӑтра **кӳлӗ** тесе ҫырас вырӑнне **„кӳл"** тесе (кӗскетсе) ҫыра пуҫланине. Тӗрӗс-ши вӑл? Ҫав сӑмахах урӑх формӑсенче мӗнле ҫырмали пирки сӑмах татӑклӑ мар-ха: **унӑн кӳлӗ** йе **унӑн кӳлли** темеле пулать.

„Кӳлӗпе кӳл" ҫинчен сӑмах хускатнӑ май акӑ кӳлӗ йачӗсене, сӑмахран „Онежское озеро" тенине вырӑсларан чӑвашла мӗнле куҫарасси ҫинчен те каласа хӑварма тивет. Мӗнле ҫырмала ӑна? **Онегӑ кӳлли** (кӳлӗ), **Онежски кӳл** йе **Онежское кӳлӗ** тесессӗн авантарах?

Терминологи йӗнӗпе те ӗҫсем пирӗн ҫавӑн пекех, пирӗн ума калама ҫук пысӑк ыйтусем сиксе тухаҫҫӗ.

Ку статйара епӗр чӑвашла тӗрӗс ҫырасси хӑшпӗр ыйтӑвӗсем ҫинче ҫеҫ чарӑнса тӑратпӑр-ха.

1933 **ҫулта Чӑваш правителстви** чӑваш **орфографи реформи** ҫинчен йышӑннӑ постановлени чӗлхе йӗнӗпе пирӗншӗн калама ҫук пысӑк, тӗрӗс утӑм малала йарса пусни пулчӗ. Анчах та ку постановлени ҫумне ҫӗнӗ пунктсем хушма кирли, хӑшпӗр пунктсене пачах урӑхлатма кирли те сисӗнет.

Хам йенчен епӗ ҫак пунктсем пирки сӳтсе-йавма сӗнетӗп.

1. Ҫӗнӗ орфографи правилисен 10-ш парагрӑфӗнчи „В" пункта пӗтӗмӗшпех улӑштармала. Правилӑсем ҫинче ӑна „урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсенчи йӗкӗр саспалли вырӑнне пӗрер саспалли ҫырмала", тенӗ. **„Коммунӑ, грамматикӑ, металл, металлурги, Марр, Валтер-Скотт..."** тесех ҫырмала.

Халӗ кӗнекесем ҫинче те, хаҫат-журналсенче те ӑна ҫавӑн пек ҫӗнетсе ҫырма тытӑнчӗҫ те ӗнтӗ.

Сӑмах вӗҫӗнче икшер ЛЛ, СС, ММ тата ытти хупӑ саспаллилӗ сӑмахсене ҫырас йӗнӗпе те татӑклӑ калаҫса татӑлмала. Ман шутпала, **Марр, металл** пек сӑмахсене урӑх падежсенче те икшер саспалли хӑварсах ҫырма йурать: **Марр—Марра,** металл — металлпа—металлу—металлсенӗн т. ыт.

СС саспаллисемпе пӗтекен **класс, прогресс, процесс** йышши сӑмахсене ҫеҫ ку правилӑна пӑхӑнтармасӑр **класа, класӗ, процесӗ классем, процессем** тесе ҫырма тивет пулӗ. Ун пек сӑмахсем питӗ сахал.

2. Урӑх чӗлхерен кӗнӗ „ец" суффикспа вӗҫленекен сӑмахсене **стахановӗц, комсомолӗц, испанӗц** тесе ҫырмала. Халӗ ку правилӑна тӗрлӗрен пӑтратса **испанцӑ, стахановцӑ,** хушӑран **стахановец, комсомолӗс, красноармеец** тесе те ҫыраҫҫӗ.

Испанӗц, комсомолӗц, красноармейӗц тесе ҫырма йышӑнатпӑр пулсассӑн, ӑна Наукӑпа Тӗпчев Институчӗн пройекчӗ ҫине урӑх формӑсенче тӗрлӗ майсемпе вӗҫлеме сӗннӗ рецепта пӑрахӑҫа кӑлармала. Унта: **комсомолцӑн, комсомолца, испанцпа** формӑпа ҫырма хушнӑ вырӑн пур. Ун пек пӑтраштарса пӗтерме кирлӗ мар. Сӑмахсене вӗҫленӗ чухне пур ҫӗрте те „ӗц" суффикса хӑварса: **испанӗц—испанӗцпа—испанӗцран— испанӗцсем, комсомолӗцпа—лӗцран—ӗцсемпе,** тесе ҫырас пулать.

Урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсенче **„цӑ"** суффикс пирӗн хӗрарӑм работнике пӗлтерекен суффикс пулса тӑрать: **работницӑ, ударницӑ, колхозницӑ, [...]лотчицӑ** тата ытти.

Кусемсӗр пуҫне тата йапала йачӗсем (существ. женск. рода) пур: страницӑ, болницӑ, станицӑ, станцӑ.

Испанцӑсем, комсомолцӑсем, стахановцӑсем формӑллӑ сӑмахсем вырӑсла нумайлӑ хисепе пӗлтерекен **„цы"** аффикслӑ сӑмахсем **(испанцы, стахановцы)** ҫумне тата тепӗр нумайлӑ хисеп аффиксӗ **„сем"** (чӑвашла аффикс) хушнинчен пулнӑ. Ҫырасах тесен ӑна **испанцысем** тесех ҫырма кирлӗ пулнӑ пулӗччӗ. Каллех пӗррелӗ хисепе куҫарса **испанцӑпа, (испанцыпа)** тесе ҫырӑттӑмӑр. Анчах чӑваш чӗлхи правилисем тӑрӑх сӑмах тӗпӗ (пӗррелӗ хисеп) ҫумне ӑна ним улӑштармасӑрах **„сем"** хушнипе нумайлӑ хисеп пулать.

Урӑх чӗлхерен кӗнӗ **„ец"** суффикслӑ сӑмахсене чӑвашла **„ӗц"** суффикспа ним улӑштаркаламасӑрах ҫырма йышӑнни ку ыйтӑва лайӑхах татса парать.

3. Урӑх чӗлхерен кӗнӗ **„ист"** тата **„изм"** суффиксемлӗ сӑмахсене чӑвашла ҫырнӑ чухне пӑсмасӑрах ҫырма йышӑнмала: **радист, специалист, коммунизм, марксизм** (па,-ран т. ыт.).

Тракториска, йе тракторис тесе ҫырассине пӑрахӑҫа кӑлармала.

4. 1933 ҫулта йышӑннӑ правилӑсенче 30-мӗш парагрӑфӑн „в" тата „г" пункчӗсене тепӗр хут пӑхса тухса, тӳрлетме тивӗҫлӗ пек туйӑнать. Вӗсене наукӑ йӗнӗпе тӗплӗн никӗслетсе паман: „...хӑш калаҫусенче кӗскен, ыттисенче вӑрӑммӑн калаҫҫӗ пулсан, пӗр сас паллипе ҫеҫ ҫырмала", тенӗ. Ҫав майпа йен падежӗн правилисене пӑхӑнакан сӑмахсене(„ӑстала"—ыйтупа килӗшӗннӗ сӑмахсем) **ЛЛА, ЛЛЕ, ЛЛИ** сыпӑкӗсене пӗрер **Л** ҫеҫ ҫырма хушнӑ. Вӑл тӗрӗсех мар. Ку ҫитменлӗхе урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсенчи йӗкӗр саспалли вырӑнне пӗрер саспалли ҫеҫ ҫырма **(комунӑ, граматикӑ** тем[...] хушнипе пӗр виҫере тӑракан йӑнӑш т[...] ме те йурать.

Пӗр йенчен, ун пек формӑра пӗрер калакансем Чӑваш республикинче ҫук[...] пӗрех **(кукӑл, ҫӑкӑр** йышши сӑмахс[...] акӑ—31-мӗш парагрӑфра асӑннисем [...] пек мар, вӗсем пирки правилӑсенче тӗрӗсех каланӑ), тепӗр йенчен, **ЛА, ЛЕ** сыпӑксемпе вӗҫленекен формӑсем пирӗн чӗлхере чылай (Глагол ловелитил[...] наклонения, наречие—**ЛА, ЛЕ** сы[...] йатсем).

Вӑрманалла тесе ҫырсассӑн аванра[...] чӗлхе саккунӗсем йенчен те тӗрӗсрех п[...] лать.

Тӑмала („тӑмаласа тӑк") тени, палла[...] **тӑмала** („ирех тӑмалла") сӑмахран, у[...] рӑмах тӑрать.

Йӑвалла („йӑва пек пӗсерӗнӗ") тени[...] **йӑвала** („кӗрӗк арки йӑвала") тенисе[...] хушшинче пысӑк уйрӑмлӑх пурри ҫака[...] шӑн та паллӑ. Икшер **ЛЛ, (лла, лл[...]** ҫырасси вырӑнне пур ҫӗрте те пӗрер[...] ҫырнипе („коммунӑ" вырӑнне „комун[...] тенипе те) ҫырас ӗҫе нумайах хӑвӑр[...] латаймӑн, типографипе издателствӑ ӗҫӗн[...] че те нумайах економи тӑваймӑн (ҫав[...] пек калакансем те пулнӑ, теҫҫӗ!), пӗре[...] саспалли ҫеҫ ҫырнипе вуланӑ чухне ку[...] та сахалтарах ывӑнмала пултӑр, вул[...] ӗҫе хӑвӑртлаттӑр тени те кунта хис[...] илме тивӗҫ сӑлтавсем мар. Ҫырӑва [...] рентес ӗҫе ҫӑмӑллатни те ҫуках ун[...] йӑвӑрлатасси, ытларах пӑтраштарусе[...] кӗрсе кайасси ҫеҫ пулма пултарать.

Апла пулсассӑн, **лла, лле** сыпӑксем[...] вӗҫленекен сӑмахсене тӗрӗс ҫырма сӗнм[...] ли ҫеҫ йулать.

Н. Ваҫанкка.

X

1938 çулхи çураки умĕн

Йалхуçалăхĕнче малта пыракансен районри слуочĕ

Елĕк районĕн центрĕнче мартăн 25—26-мĕш кунĕсенче йалхуçалăхĕнче малта пыракан стахановецсемпе ударниксен слуочĕ пулса иртрĕ.

— Епĕр, слуота килнĕ делегатсем, иртнĕ çулта тунă çитĕнĕве пĕтĕм хавасланăхпа паллă тăватпăр, теççĕ делегатсем.

Иртнĕ çулта, колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-нче ĕçлекенсем вайлă тырпулшăн большевикла кĕрешнине, пысăк ĕç тухăçĕшĕн кĕрешнине, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешнине кăтартрĕç. Сталин йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илмеле тенĕ задачăна пурнăçа кĕртесси патне çывхарчĕç. Пирĕн çĕршыв иртнĕ çул, 1935 çулхипе танлаштарсан 1,5 хут ытла тĕштырă туса илчĕ. Нумай колхозсем вăтам шутпа кашни гектартан 100—120 шер пăт, уйрăм участкăсем çинчен 200—250-шар пăт тырă илчĕç. Çакăнпа пĕрлех йалхуçалăхĕнче орденоносецсем, стахановецсемпе ударниксем шăтса ÿсрĕç.

Иртнĕ çулта Елĕк районĕнчи нумай колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç.

„Доброволец" колхоз 10 гектар çинчен вăтамăн 26,7-шер центнĕр урпа, Соловйов бригади 1,6 гектар çĕр участки çинчен 5.420 пăт выльăх кăшманĕ туса илнĕ. Калинин йачĕпе тăракан колхоз 59 гектар çинчен вăтамăн 23,4-шер центнĕр, „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз 3 гектар çинчен 32,3-шер центнĕр йасмăк, Федăрав йертсе пыракан звено 214 шар пăт ыраш туса илнĕ. Çавнашкалах „Труд" колхозри Никитин звени 4 гектар çинчен 244-шар пăт сĕлĕ, „Социалисăм" колхозри Игнатйĕвă звени 8,8 гектар çинчен 46-шар пăт кантăр сÿсĕ туса илнĕ. Кун пек лайăх тĕслĕх кăтартакансем татах та нумай.

Машинă-трактăрлă станци те колхозсене нумай пулăшу pană. 1934 çулта районĕпе 13 993 гектар çĕр сухаланă пулсан, 1937 çулта 31 пин гектар сухаласа акнă.

Колхозсем иртнĕ çулта таса суртлă вăрлăхсем акнипе тата агротехникăла ĕçсене тĕрĕс пурнăçласа пынипе пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ. Çавна шута илсе, кăçал пĕр колхоз та суртсăр вăрлăх акмаст. Пайанхи куна районта 25.765 центнĕр вăрлăха трийерпа суртланă. Çĕр çемçетмелисене: фосфорит çăнăхĕ 377,2 тоннă кÿрсе килнĕ, 141.346 лав тислĕк, 13.975 центнĕр пĕвĕ йушкăнĕ, 60.650 центнĕр торф уйа кăларнă.

Районта 43 колхоз Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма зайавкăсем pană.

Слуотра йалхуçалăхĕнче малта пыракансене, вайлă тырпулшăн, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешекен маçтăрсене—пурĕ 53 çынна премилерĕç.

Слуот кăçалхи çуракине чи кĕске срукра иртерме йышăнчĕ.

В. Йефремăв.

Ветеринари работникĕсем колхозсене тухса курмаççĕ

Çатракассинчи колхозра (Куславкка р.) лашасенчен чылайĕшне, кÿлмели таврашсене йусаман пирки, суранласа пĕтернĕ. Конюхсем лашасене вăхăтра шăвармаççĕ, апат памаççĕ. Правлени членĕсем вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслемеççĕ.

Çавнашкалах Аслă Сала колхозĕнче те лашасем çине чÿнсăр пăхнипе 3 лашана ĕçе йурăхсăра кăларнă, 3 кĕсрене хăм пăрахтарнă Çĕнĕ Салара 2 лашана пăхма пĕлмесĕр уксахлатнă.

Чылай колхозсенче пĕтĕ кĕсресене „ĕçрен хăтарнă, вĕсене ниçта та кăлармала мар" тесе, тула та кăлармаççĕ.

Районра ветеринари работникĕсемпе зоотехниксем сахал мар. Анчах вĕсем колхозсене тухса курмаççĕ.

Н. М.

Почтă уйрăмĕсем çуракине хатĕрленеççĕ

Йетĕрне районĕнчи çыхăну работникĕсем çураки вăхăтĕнче тĕрлĕрен ĕçсем туса ирттерме хатĕрленеççĕ.

Çураки вăхăтĕнче районри почтă уйрăмĕнчен çырусемпе хаçат журналсене почтă уйрăмĕсемпе агентствисене автомашинăпа леçме палăртса хунă.

Районри пур колхозсенчи бригадăсенче те çураки вăхăтĕнче витринăсем пулаççĕ, почтальонсем ку витринăсем çине çĕнĕ хаçатсем çыпăçтарса хăвараççĕ.

Çак кунсенче çыхăну ĕçĕнчи работниксен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Ку канашлура вĕсем республикăри хаçатсене хаçатсем тухнă кунах, центăрти хаçатсене иккĕмĕш кунне почтă уйрăмĕсене çитерсе пама йышăннă. Почтă уйрăмĕсемпе агентствăсенчи работниксем, çураки кампанине активлăн хутшăнса ĕçлес тĕлĕшпе социалисăмлă ăмăрту договăрĕсем тăваççĕ. Çак кунсенче Ман-Чуршă агентствипе Йетĕрне почтă уйрăмĕ, Шăматрипе Кĕçĕн-Чурашри почтă уйрăмĕсем тата ыттисем те ăмăрту договăрĕсем тунă.

Гер. Иванов.

Ăмăртăва тухрĕç

ШĂХАСАН. Нумай пулмаст кунта йалсовет тата колхоз председателĕсен, йалхуçалăхĕнчи специалиссен, культурă фронтĕнче ĕçлекенсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Культурăлă-массăлă ĕçĕн задачисем çинчен парти райкомĕн çекретарĕ Федăрав йулташ доклад туса пачĕ.

Иккĕ уйăх кайала район культурлă-массăлă ĕçсен планне йышăннă. Анчах вăл плана пурнăçлас тесе Шăхасан районĕнче паллă ĕçсемех тăвайман-ха. Умри тĕп задачă—культурăлă-массăлă,ăнлантарулă ĕçе анлăн сарса, умри мĕн пур задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыма ĕçхалăх массисене активлă хутшăнтарасси пулат.

Канашлу Канаш районĕпе социалисăмла ăмăртăва тухма ăмăрту договăрне йышăнчĕ.

Шăхасансем кăçал канашсемпе ăмăртса ĕçлесе, ăмăртура мала тухма, вăтам шутпа гектартан— 100 пăтран кайа мар тĕштырă, 5,5 центнĕр кантăр сÿсĕ, 175 центнĕр çĕрулми, 2,5 центнĕр— клевĕр вăрри туса илме, çуракине 7 кун хушшинче вĕçлеме, тырпулсене 5—6 кунта вырса пухма, кашни трактăрпа 800 гектартан кайа мар сухалама, комбайнсемпе 5000 гектар çинчи тырпулсене пухса кĕме, йалхуçалăх ĕçĕсене вĕрентекен кружоксенче 1500 колхозника вĕрентсе кăларма, агротехникăлă ĕçсене анлăн пурнăçа кĕртсе пырса, Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕхе çĕнсе илессишĕн кĕрешме сăмах пачĕç.

Канашлу ăмăрту договăрне виçĕ хутчен тĕрĕслесе тухма йышăнчĕ. Ăмăрту арбитрĕ пулма „Чăваш Коммунĕ", „Красная Чувашия" хаçат редакцисене тата Коротков йулташа суйласа хăварчĕ.

В. Чернов.

Лашасем çинчен маннă

Алексейĕвкăри „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозра (Йетĕрне р.) кашни çулах лашасем çуракине начар тухаççĕ. Çавăнпа та, колхоз çураки ĕçĕсене районра чи кайа йулса вĕçлет. Иртнĕ çулта вайлă тырпул туса илнипе лашасене тăрантарма апат та çителĕклĕ темеле. Анчах кунта лашасем çине тÿнтерле пăхаççĕ. Конюхсем лашасене вăхăтра шăвармаççĕ, апата та тирпейлĕ тыткаламаççĕ. Правленинче ĕçлекенсем те лашасене пăхассипе нимĕнле ответлăх та туймаççĕ.

К-в.

Осоавиахимăн Сокольнически райсовечĕн утлă çар шкулĕнче (Мускав) çамрăк хĕрсем производствăран уйрăлмасăр йуланутпа çуреме вĕренеççĕ.

Ÿкерчĕк çинче: Ворошилăвла йуланутçăсем.

(А. Грибовский фото-ÿкĕрчĕкĕнчен.)

Суйлав саккунне тĕплĕн вĕренмеле

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене пĕтĕм чăваш ĕçхалăхĕ хавасланса вĕренет.

Шупашкарти чылай предприйатисенче, учреждениссенче, шкулсенче РСФСР, Чăваш АССР Конституцийĕсемпе РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренмели кружоксем аван ĕçлеççĕ. Тир-сăран савăтĕнче кашни цехрах кружоксем организациленĕ. Кружоксен занятийĕсем ернере иккшер хут пулаççĕ. Рабочисемпе работницăсем занятисене йĕркелĕ çÿреççĕ. Спирт савăтĕнчи спирт йухтаракан цехра Пегайĕвă йулташ бригадинчи кружокра занятисем аван ирттереççĕ. Кружокăн ку тарапччен 5 занятипулнă. Занятисенче ССР Союз Верховнăй Совет суйлавĕн итогĕсемпе РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен пулас суйлавĕсем çинчен, Сталин йулташ Иванов йулташа pană ответа, 1937 çулта декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Мускаври Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсем умĕнче Сталин йулташ каланă сăмаха, коммунистсемпе партире тăманнисен суйлав блокĕ çинчен 1937 çулти декабĕрĕн 8-мĕшĕнче Мускаври Молăтăвский суйлав округĕнчи суйлавçăсем умĕнче Молăтăв йулташ каланă сăмаха вĕренчĕç. Халĕ ПСК(б)Парти Тĕпкомĕ пĕтĕм суйлавçăсене, рабочисене, работницăсене, хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсене тата Хĕрлĕ Çара, совет интеллигенцине чĕнсе каланине вĕренеççĕ. Кунта кружок занятисене çÿреймен çынсем патне парткомуйăрнă агитатăрсем хваттерсене кайса ăнлантараççĕ.

Районсемпе колхозсенче те агитаципе массăлă ĕç сарăлса пырат. Колхозниксем суйлав саккунĕсене кружоксем организацилесе вĕренеççĕ.

Тури Сурăмри (Шăхасан р.) „Шурăмпуç" колхозра 6 кружок организациленĕ. Кружоксене учителсем, ПСК(б)Парти райкомĕ çумĕнчи курсран вĕренсе тухнă агитатăрсем йертсе пыраççĕ. Мартăн 25-мĕшне кашни кружок 5-шер занятиирттернĕ. Суйлав Положенине вĕренмели кружоксенче 170 çын вĕренеççĕ.

Çак кунсенче Тутаркас районĕнчи Калайкасси йалсоветĕнчи 14 агитатăр курсран вĕренсе тухнă. Вĕсем ĕнтĕ йалсоветри кашни колхозрах суйлав саккунне вĕренмели кружоксем организациленĕ. Малтанхи занятисенче Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн XVI-ш созыври IV-ш Сесси материалĕсене вĕренчĕç. Халĕ РСФСР Конституцине вĕренеççĕ. Йалсоветĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене хатĕрленнине кăтартас майпа çтена хаçачĕ кăларнă. Хутла пĕлмен 104 çынна пурне те вĕренĕве хутшăнтарнă. Чуманкасси йалсоветĕнче, суйлава хатĕрленнĕ май, 18 çынна хутла пĕлменнисен шкулĕнчен вĕрентсе кăларнă. Колхозниксем, кашни кас 80—90 çынран кайа мар вулав çуртне пухăнса „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине" вĕренеççĕ. Хаçат журналсем вулаççĕ. Радио урлă çĕнĕ хыпарсем пĕлеççĕ.

Йетĕрне районĕнчи Шăмат йалсоветĕнче 7 колхозра суйлав саккунне вĕренмели кружоксем ĕçлеççĕ. Кружоксене тулли мар вăтам шкулти учителсем йĕртсе пыраççĕ. Учителсенчен Токарĕв йултапа тăрăшса ĕçлет. Вăл йаланах агитатăрсене хăй патне пухса ăнланман ыйтусене ăнлантарат.

Суйлав саккунне вĕренес ĕç Елĕк районĕнчи колхозсенче те сарăлса пырат. Актайри „Комбайн" колхозра „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенине" вĕренме 3 кружок организациленĕ. Пĕр кружокĕнче комсомолецсем, иккĕмĕшĕнче — колхозниксем, виççĕмĕшĕнче — хĕрарăмсем вĕренеççĕ. Кружоксенче иртнĕ кунсенче „сылтăмла-троцкисла блокăн" ирсĕр ĕçĕсем çинчен сÿтсе-йаврĕç. Халĕ РСФСР Конституцине РСФСР географине вĕренме пуçланă.

Анат Хоразан йалĕнчи вулав çуртĕнче суйлавçă кĕтесси уçнă. Кунта кашни кунах колхозниксемпе йединоличниксем суйлав саккунне вĕренмели кружоксен занятийĕсене хавасланса çÿреççĕ. ССР Союз Верховнăй Советне суйланă пекех, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене те телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн, Ленинпа Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вайăрап тăрăшакан, чи лайăх çынсене суйлама хатĕрленеççĕ.

Анчах çак хушăрах республикри хăш пĕр районсенче, йалсоветсенче, колхозсенче тата Шупашкар хулинчи предприйатисенче те суйлав саккунне вĕренес ĕçе организацилемен. Шупашкарти çĕлĕксем çĕлекен „Хĕрлĕ кустарь", сĕтел пукансем тăвакан „Хĕрлĕ мебельщик" ертелсенче суйлав саккунне вĕренме тытăнман. „Хĕрлĕ кустарь" ертелре „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине" вуласа кăтартнипех лăпланнă. Ертел членĕсенчен чылайĕшĕ „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенине" пĕлмеççĕ.


Вăрмар районĕнчи Ихра Сырминчи „Делегаткă" колхозра П. Григорйĕв агитатăр курсран вĕренсе тухнăранпа та колхозниксене çитес суйлавсем çинчен каласа ăнлантарман.

Нерĕшри (Çĕрпÿ р.) „Хĕрлĕ Октябĕр" колхозра агитатăрсен курсĕнчен 8 çын вĕренсе тухнă. Анчах агитатăрсем çак тарана çитсе те суйлав саккунне вĕрентес ĕçе пуçăнман.

Анаткасри (Трак р.) „Большевик" алăсталăх ертелĕнче суйлав Положенине вĕренес ĕçе тытăнман, кружок организацилемен. Ертелре хутла пĕлмен çынсем те чылай. Çапах та культработник Трофимăв нимĕн те тумаст.

Парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентессине пур çĕрте те тивĕçлĕн йĕркелесе çитермен-ха. Фактăсем çавăн çинчен калаççĕ. Йалсоветсенче йал активне, çекци членĕсене çак ĕçе анлăн хутшăнтарас пулат. Çак кунсенчех пур йалсоветсенче те РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренес ĕçе анлăн йĕркелесе йамала.

В. В.



Колхозниксем хаçат кăлараççĕ

Муркашри (Тутаркас р.) „Авангард" колхоз çумĕнче темиçе çул хушши çтена хаçатне кăларман пулнă. Хаçат кăларас ĕçе колхоз правленинче ĕçлекенсем чăрмантарса пынă. Колхоз председателĕ Константинăв хаçат çине çыракансем çинчен актăсем çырса хăрат нисем те пулнă. Халĕ Константинăвăн киревсĕр ĕçĕсене палăртса, ăна ĕçрен кăларчĕç. Колхоз председателĕ пулса Çеньков Çемен ĕçлет. Колхозра çтена хаçачĕ 6 кунта пĕр номĕр тухса тăрат. Унта колхозри çитĕнÿсем çинчен, çитменлĕхсем çинчен çыратпăр. Уйрăмăнах колхозри стахановецсем, ударниксем çуракине хатĕрлĕнес тĕлĕшпе, вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленисем çинчен çырса çутататпăр. РСФСР Верховнăй Советне суйлама мĕнле хатĕрленнисем çинчен йатарласа уйрăм номĕр кăлартăмăр.

Колхозниксем пирĕн хаçата питĕ йуратса вулаççĕ. Колхозниксене хамăрăн хаçата вуласа паратпăр.

Çтена хаçат редактăрĕ А. Рыжков

Вăрман хатĕрлевĕ

Первомайски вăрманпунктĕнче

ЙЕПРЕÇ. Первомайски вăрманпунктĕнче ĕçлеме Шăнкăртампа Патăрйел районĕсене çирĕплетнĕ. Кунта уйрăмăнах Шăнкăртам районĕнчи колхозсем тăрăшса ĕçленине палăртмала. Ку районти чылай колхозсем хăйсен çулталăкри вăрман хатĕрлев планĕсене тултарчĕç те ĕнтĕ. Сăмахран, Чичкан йалсоветĕнчи „Икĕнчĕ" колхозăн план тăрăх 991 кубла метр касса хатĕрлемеле, 2030 кубла метр турттармала пулнă пулсан, вăл мартăн 8-мĕшнех 1020 кубла метр касса хатĕрлесе 2049 кубла метр турттарнă. Колхозниксем халĕ те вăрманта ĕçлеççĕ.

„Красный Октябрь", „1-ое августа", „Марс" тата ытти колхозсем те хăйсене панă заданисене ытлашшипех пурнăçларĕç. Акă „Красный Октябрь" колхоз 333 кубла метр касса хатĕрлесе, плана 106 проц. тултарчĕ.

Вăрманта йалан ĕçлекенсем (кадрăвиксем) те хăйсем çине илнĕ обйазательствăсене ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Сăмахран, иккĕмĕш çул çак вăрманпунктĕнче ĕçлекен Березин йулташ кăçалхи çул 1500 кубла метр касса хатĕрлеме обйазательствă илнĕ. Пайанхи кун вăл 50 проц. йахăн пурнăçланă та ĕнтĕ. Кашни кун 6,53 кубла метр касса, нормăна 200-шер процент тултарат.

Березин йулташпа пĕрле ĕçлекен А. Дружинин,И. Барайĕв тата Михаил Соломонидинпа унăн ывăлĕ Роман Соломонидин йулташсем те обйазательствăсене срукчен тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ, ĕçре пурте пĕр-пĕрнипе ăмăртаççĕ. 65 çулхи Михаил Соломонидин йулташ кăçал хăй пĕччен 1000 кубла метр касса хатĕрлеме договăр тунă, пайанхи куна вăл 400 кубла метр ытла касса хатĕрленĕ. Куллешхи нормăна Соломонидин йулташ йаланах 200—209 процент тултарса ĕçлет.

Çак кунсенче пулса иртнĕ вăрманпунктĕнче ĕçлекенсен пĕрлешÿлĕ пухăвĕ вăрман хатĕрлев ĕçĕ мĕнле пынине сÿтсе-йавса, плана кĕске вăхăтрах тултарассишĕн тимлĕн ĕçлеме пулчĕ. Çак пухура вăрман хатĕрлевĕнче лайăх ĕçлекенсене парнесем пачĕç. Вăл шутран „Икĕнче", „1-ое августа", „Марс" колхозсене пĕрер патефон, „Красный Октябрь" колхоза радиоприйомник, бригадирсене: Салихăва („Кр. Октябрь" колхоз), Алекберăва („Икĕнче" колхоз), Шейтулина („1-ое августа" колхоз) çĕвĕ машинĕсем, уйрăм колхозниксемпе кадрăвиксене костумсем, шараварсем, укçа пачĕç.

Первомайски вăрманпункчĕ мартăн 20-мĕшне 1-мĕш квартăл планне касса хатĕрлессипе 120 процент, турттарассипе 79 процент тултарнă. Вăрманта ĕçлекенсем плана кĕске вăхăтрах тултарма пулчĕç.

Г. Марушĕв.

Çитменлĕхсене халĕ те пĕтермен

ВАРНАР. Çарăкăри вăрманпункчĕ плана тултарассипе кайра пырат. Мĕншĕн тесен кунта рабочисене ĕçлеме кирлĕ услови туса паман. Ăна акă çакă тĕслĕхсем те аванах кăтартса параççĕ.

Нумайах та пулмаст, кунта Йепеш, Сăкăт, Хурăн Кăкшăм колхозсенчи колхозниксем иккшер ерне хушши ĕçлес тесе пычĕç. Анчах, ĕçхатĕрĕсемпе хваттерсем йапăх пулнă пирки, вĕсен çав тухăччех киле каймала пулчĕ.

Вăрманпункчĕн инструментсем çитлĕксĕр, пуррисем те ĕçлемели вырăнта 5—6 çухрăм айакри складсенче выртаççĕ. Хăш вырăнта ĕçлемелине лайăххăн кăтартса памаççĕ. Çавна шырасах тепĕр чухне чылай вăхăт иртет.

Бараксенче таса мар. Акă 86-мĕш квартăлти бараксенче урайсене çумаççĕ, сĕтел-пукансем çитлĕксĕр, вĕретнĕ шыв çук. Хаçат-журналсем те тупса вулама çук. Çитменлĕхсем çинчен каласан десятниксем вăрçса тăкаççĕ.

Колхозник.

Плана тултарчĕ

ЕЛĔК. Нÿретри Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлевĕпе районта малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланат. Колхозăн 1-меш квартăлта 163 кубла метр касса хатĕрлемеле, 105 кубла метр турттармала пулнă, пулсан, 176 кубла метр касса хатĕрлерĕ, 116 кубла метр турттарчĕ.

И. Астрăв.

Кашни кун икшер нормă

КАНАШ. Вакунсем йусакан савăтри таварла комбинатра ĕçлекен стахановкă Александра Кириллăва йулашки вăхăтра паха тĕсл хсем кăтартса ĕçлеме пуçларĕ. Мартăн 16-мĕшĕнчен пуçласа куллехи нормăна йаланах ытлашшипе тултарса ĕçлет.

Кирилова 19 çулта. Вăл 1936 çулта хапрăк-савăт шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Йулашки кунччĕнех „фрезер" тата „фуганка" станоксем çинче ĕçлет. Халĕ вăл станокпа ĕçлеме лайăх вĕренсе çитрĕ.

Мартăн 17-мĕшĕнче Комиссарав столйар та вакун алăкĕсем туса нормăна 205 процент тултарчĕ.

М. Маганьев.

Н. И. Мурзайĕв

Шкулсенче контурлă карттăпа ĕçлесси

Парти Тĕпкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Пуçламĕшпе вăтам шкулсенче географине вĕрентесси çинчен" йышăннă постановленире вĕренекенсем физикăлă географи материалĕсене тата карттăна начар пĕлнине уйрăмăн кăтартса хăварнă. Çак çитменлĕх пирĕн шкулсемшĕн пайан кун та пысăк кăлтăк вырăнче шутланса тăрат. Анчах мĕнрен килет-ха ачасем географи материалĕсене çавăн пек çителĕксĕр пĕлни тата карттăпа ăнланулăн усă курайманни?

Пирĕн шутпа, вăл, чи малтан, географи вĕрентес ĕçĕн пахалăхне тивĕçлĕ вырăна хуманнинчен, урoксене ачасен кăмăлне каймала интереслă йĕркелеме пĕлменнинчен, географи картти тата ытти материалсем тăрăх вĕренекенсемпе практикăлă ĕçсем туса ирттерме пĕлменнинчен килет. Паллах, темле лайăх учитĕл те урок вăхăтĕнче пурин çинчен те каласа пама пултараймаст. Çавăнпа, вĕренекенсене тĕп материалпа паллаштарса, малала практикăлă ĕçсем урлă вĕсене хăйсем тĕллĕн вĕренме, пур пек материала тата ытларах пуйанлатма çул кăтартса памала. Çак вăл учитĕл умĕнче пысăк задачă пулса тăрат.

Географи материалĕ тăрăх практикăлă ĕçсем туса иртерес тата карттăна ăнланса вăренес ĕçре контурлă карттăсем пысăк пулăшу параççĕ. Йулашки çулсенче контурлă карттăсен усине шкулсенче ăнланса илчĕç темеле. Вĕрентекенсем унпа хăйсен ĕçĕнче чылай усă кураççĕ. Анчах нумайĕш учителсем контурлă карттăна ĕçлессине ансăрăн ăнланаççĕ. Вĕсен шучĕпе контурлă карттăпа ĕçлесси карттă çине шывсен; сăртсен йачĕсене тĕрĕс çырса хунипех, урăхла каласан, номенклатурăна паллă тунипех пĕтет. Ку ĕç çителĕксĕр. Контурлă карттăсемпе географин мĕн пур материалĕ тăрăх усă курса пыма пулат, çавăнпа та контурлă карттăсем шкулта питех те кирлĕ пособисем пулса тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра шкулсенче контурлă карттăсемпе усă курасси вăхăтран вăхăта çеç пулса пырат. Вĕрентекенсем час-часах çĕнĕ материалсем тăрăх вĕреннĕ номенклатурăна контурлă карттăсем çине урок хушшинче паллă тума вăхăт çук тесе, вăл ĕçе ачасене килте тума парса йараççĕ. Анчах заданисене мĕнле пурнăçласа килнине учителсем кайран урoксенче тĕрĕслемеççĕ, çавна пула вĕренекенсем номенклатурăна тÿсме çук пăтраштарса пĕтереççĕ. Çав майах контурлă карттăсем çине „экватор" вырăнне „икватор" йе „елеватор", „Дарданелы" вырăнне— „Дирдунелы", „Дурдунелы", „Магелан проливĕ" вырăнне—„Гамелан проливĕ", тесе çыраççĕ.

Вĕренсе пынă номенклатурăна, терминсене тĕрĕс калама, çырма вĕрентес тесен, контурлă картăсемпе кашни урoкрах 1—2 хутчен 5—8 минут хушши усă курмала. Çакă 5—8 минут хушшинче контурлă карттăпа ĕçлени урока интереслентерет тата номенклатурăра терминсене тĕрĕс ăнланса çырма вĕрентет.

Физикăлă географи урoкĕсенче контурлă карттăсем çине тĕрлĕ сăрлă кăранташсемпе релйеф пайĕсене паллă тума пултаратпăр, сăмахран: симĕс сăрпа айлăмсене, кăвак сăрпа—кÿлĕсене, тинĕссене т. ыт. те.

Çапла вара епĕр, номенклатурăна паллă тунă хыççăн, контурлă карттăран физикăлă карттă тăватпăр. Çак ĕç вĕренсе пыракан материала çирĕплетнисĕр пуçне, карттă ÿкерме хăнăхусем парат.

Економикăла географи урoкĕсенче контурлă карттă çине чикĕ паллисене, çĕр çинчи пуйанлăхсене, вăрмансене, промышленнăç, йалхуçалăх вырăнĕсене паллă туса пымала. Контурлă карттăсем çинех тинĕс йухăмĕсене, хĕллехи, çуллахи тата çулталăкри изотермăсене кăтартмала, ăçта мĕнле йăвăç-курăк ÿснине, мĕн чухлĕ йур, çăмăр çунине, ăçта мĕнле чĕрчун сарăлнине палăртма аван.

Нумайĕш вĕрентекенсем економикăла географи урoкĕсене „лекци" пек туса ирттереççĕ. Çак „лекцисенче" темĕн чухлĕ йапала йачĕсем, цифăрсем тĕл пулаççĕ. Цифăрсем нумай пирки вĕренекенсем чи кирлĕ цифăрсене те манса пыраççĕ. Апла ан пултăр тесен, вĕрентекенĕн ачасене цифăрсемпе тивĕçлĕ таблицăсем, диаграммăсем урлă паллаштарма тăрăшмала. Кирлĕ цифăрсене асра тытма вĕрентес ĕçре контурлă карттăсем те пысăк пулăшу параççĕ. Сăмахран: тĕрлĕ облăçсем тăрăх выльăх-чĕрлĕх мĕнле ĕрченине, çĕр тĕпĕнчи пуйанлăхсем мĕнле сарăлса выртнине, промышленнăçпа йалхуçалăх продукцийĕсем мĕнле ÿссе пынине контурлă карттăсем çинче карттă-диаграммăсем туса кăтартма пулат. Ку вара карттă материалне тĕплĕн ăнланса вĕренме те май парат, çав вăхăтрах чи кирлĕ цифăрсене те лайăх астуса йулма пулăшат.

Вĕренекенсем карттă материалĕсемпе тарăнрах интересленччĕр тесен, карттăпа кашни кун ĕçлени кирлĕ. Çавăнпа та шкулсенче пулса иртекен лекцисем, докладсем, ушкăнпа хаçат вуласси тата ытти те йаланах карттăпа та контурлă карттăпа ĕçлессине çыхăнса пымала. Тĕнчере пулса иртекен ĕçсене вуласа пĕлнĕ хыççăн, вĕренекенсем контурлă карттă çине тивĕçлĕ паллăсем тума пултараççĕ. Уйрăмах, контурлă карттăсемпе ĕçленĕ çĕрте пире тĕрлĕрен експедицисен ĕçĕсем пуйан материалсем параççĕ.

Истори тăрăхĕнче тĕрлĕ маршрутсемпе темĕн чухлĕ çÿревсем, експедицисем пулса иртнĕ. Хальхи вăхăтра Совет експедицийĕсем Çурçĕр йенче çĕнĕ утравсем, проливсем тупаççĕ, паттăр лётчиксем пысăк вĕçевсем туса ирттереççĕ. 1937 çулхи майăн 21-мĕшĕнче пирĕн Совет çыннисем Çурçĕр полюсне çĕнтерсе илсе, унта „Çурçĕр полюс" станцийĕ организацилерĕç. Чаплă геройсем Çурçĕр полюсĕ урлă Америкăна çул хыврĕç. Çĕнĕрен-çĕнĕ походсем, вĕçевсем. Вĕсене пурне те контурлă карттăсем çинче лайăх кăтартма пулат. Ку ĕç пирĕн ачасене карттă материалĕпе паллаштарнисĕр пуçне, социалисăмла çĕршыва тата ытларах йуратма вĕрентет, аслă çĕршывăн пуйанлăхĕсене пĕтĕмĕшпех çавăрса илме пултаракан çынсем пăхса çитĕнтерме пулăшат.

Карттăна тĕплĕн ăнланмасăр, ăна хăй çинчи çырусене вуласа çеç вĕренни ĕçре сийĕн те кÿме пултарат. Çавăнпа та шкулсенче ачасене чи малтанах карттă никĕсĕпе, унăн елеменчĕсемпе паллаштармала. Проекци, масштаб, условнăй паллăсем—карттăн никĕсĕсем, унăн тĕп елеменчĕсем пулаççĕ. Контурлă карттăсемпе карттă елеменчĕсене вĕренес ĕçре те усă курмала.

Карттă елеменчĕсемпе паллаштарнă чух масштаб çинче уйрăмах чарăнса тăмала. Нумай учителсен шухăшĕпе масштаба вĕренесси—çăмăл ыйту. Çавăнпа та вĕрентнĕ чухне вĕсем масштаб çинчен сахал калаççĕ, каласан та практикăлă ĕçсем тумаççĕ. Каламала, ку темăпа задачăсем шутланисĕр пуçне, контурлă карттăсемпе усă курса, тем тĕрлĕ виçесем тума пултаратпăр. Сăмахран: материкри сăмсахсем, хуласем хушшинчи çул тăршшĕне линисемпе пĕрлештерсе виçсе çелме пулат. Час-часах епĕр йухăншывсем, чикĕсем çинчен темĕн чухлĕ цифăрсем паратпăр. Çав вăхăтрах вĕренекенсем масштабпа усă курса çак цифăрсене хăйсемех тупса пĕлме пултараççĕ. Контурлă карттăсем çинче епĕр тĕрлĕ облăçсен, тинĕссен, кÿлĕсен лаптăкне те виçсе палăртма пултаратпăр. Ку ĕçре милиметрлă хутпа тĕрĕс виçмели хатĕрсем кирлĕ пулаççĕ.

Магазинсенче час-часах уйрăм облăçсем тăрăх контурлă карттăсем пулмаççĕ. Пулсан та хăшпĕр шкулсем вĕсене илеймесĕр йулаççĕ. Çавăнпа та контурлă карттăсене шкултах хатĕрлеме те пулат. Вĕренекенсене карттă ÿкермели майсемпе паллаштарса, хăнăхусем памала. Контурлă карттăсене кĕнекесем çинчи карттăсем çинчен, масштаб улăштармасăр, чÿрече кантăкĕ çине хурса, çавăн пекех копировкă хучĕ витĕр те ÿкерсе илме пулат. Контурлă карттăна пуринчен ытла чÿрече кантăкĕ çумне çыпăçтарса ÿкерме çăмăл. Ĕçе сарлакан пуçарас тесен, шкулсенче ăна валли уйрăм кĕтес те тумала. Вăл кĕтесре кантăкпа витнĕ пысăк йешчĕк пулмала. Йешчĕк ăшне електричествă кÿртмеле, йе краççин лампи, ларсан та йурат.

Контурлă карттăпа ĕçлесси çакăнта кăтартнипех пĕтмест. Çав карттăпа географи материалĕ тăрăх темĕн тĕрлĕ практикăлă ĕç те туса ирттерме пулат. Урoксенче йе урoксем хыççăн туса ирттернĕ практикăлă ĕçсем вĕренекенсене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме пахи хăнăхусем параççĕ.

Испанири фронтсенче

Пăлхавçăсемпе интервентсен çарĕсем Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра республикă çарĕсем паттăрăн хирĕç тăнине сирме тăрăшаççĕ. Фронтăн пĕтĕм тăршшĕпех—Уескăран пуçласа Сарагосă патне çитеччченех тата унтан кăнтăрала халĕ те хаяр çапăçусем пыраççĕ. Мартăн 27-мĕшĕнче ирхине республикă çарĕсем пăлхавçăсен пур атакисене те ăнăçлăн сирнĕ.

Кантăрлапа пăлхавçăсем çĕнĕрен атакăсем тума пуçланă. Сывлăшра республиканĕçсен позицийĕсем çинче пăлхавçăсен самолѣочĕсем пурĕ 200 вĕçнĕ.

Республикă самолѣочĕсем фашиссен самолѣочĕсемпе çапăçăва кĕрсе кайнă.

Вĕсем фашиссен самолѣочĕсене республиканĕçсен позицийĕсем çине бомбăсем пăрахма паман. Кунсăр пуçне республикă авиацийĕ фашиссен çарĕсем çине пулеметсенчен пенĕ.

Республиканĕçсем фашиссен Леруд йатлă хула çине бомбăсем пăрахма хăтланнă икĕ самолѣотне пĕрсе антарнă.

(ТАСС).

Америкăри учитĕлсен йавăр пурнăçĕ

Нѣйу-Йоркра „прогрессивная ассоциация просвещения" членĕсен сиесĕ пулса иртнĕ. Сиесра 2 500 делегат пулнă. Сиес учитĕлсен пурнăçне тĕрĕслесе пĕлес тĕллĕшпе йатарласа тунă сакăр комиççин доклачĕсене итленĕ.

Америкăри Пĕрлешỹлĕ Штатсенче 1 мĕлйун учитĕл шутланать. Вĕсенчен нумайрахăшĕ йавăр пурнăçпа пурăнаççĕ. Нумай общинăсем учителсене, вĕсен харпăрхăй тата общĕствăла пурнăçне хутшанса, хăйсем тĕллĕн пурăнма памаççĕ. Учитĕлсене мĕнле тумтир тăхăнса çỹремелине, пушă вăхăтра мĕн тумалине тата кам патне çỹремелине те кăтартса параççĕ. Учитĕл кам патне хваттере кĕмелине, тата хăçан сывăрма выртмалине, мĕнле общĕствăлă ĕçпе ĕçлеме пултарнине те кăтартса хунă.

(ТАСС).

Кĕскен

●● Испанире Мадридри „Прогресс" театрта М. Горькин „Амăшĕ" повеçне спектакѣ лартса кăтартнă. Спектакѣ пысăк ăнăçлăхпа иртнĕ.

●● Йапонĕçсем Шанхайа тата хăйсем йышăннă ытти хуласене опиум, кокаин тата ытти наркăмăшсем пит нумай кỹрсе тултараççĕ. Çучжоура (Шанхай—Нанкин чукунçулĕ çинчи хула) йапонĕçсем лайăх мар вăйăсем выѣламалипе аскăн çурчĕсене пурĕ 500 уçнă.

●● Германи фашисĕсем хушнипе Испанири пăлхавçăсем Сан-Себастйан патĕнче (Франци чикки çывăхĕнче) çĕнĕрен пысăк аеродром тума пуçланă. Германи фашисĕсем йертсе пынипе Пасахес портне (Сан-Себастйанран инçех мар) çĕнетсе йусанă. Вăл порт урлă пăлхавçăсем Германирен пыракан вăрçă хатĕрĕсене илсе тăраççĕ.

(ТАСС).

Англири чи пысăк самолѣот. Унăн тăршшĕ 34 метр та 78 сантиметр, сехетре вăл 240 километр вĕçет, унăн ăшĕнче 42 çын вырнаçма пултарать. (Сойузфото).

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн çĕр çинчи çар училишчисене вĕренме илесси

1938 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшчен Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн çĕр çинчи çар училишчисене вĕренме кĕрес текенсенчен заявленисем илеççĕ.

Çар училишчисене арçынсене хăйсен сывлăхĕсем тĕлĕшпе строевой службăна йурăхлисене, 17 çултан пуçласа 23 çула çитнисене илеççĕ. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн чаçĕсенчи красноармейĕçсемпе командирсене тата нумай срукláха отпускра пурăнакансене 24 çулхи таран илеççĕ.

Сакăр артиллери училишчисене—Ленинградри 1-мĕшпе 2-мĕш, Кийеври 1-мĕшпе 2-мĕш, Одессăри, Краснодарти, Севастополѣри, Ростоври училишчăсене—вăтам шкул чухлĕ пĕлỹ илнисене çеç илеççĕ, çар чаçĕсенче тата нумай срухлăх отпускра пурăнакансене 9 класран кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Ытти пур артиллери училишчисене, пур техникăлă тата специалѣнăçлă училишчăсене (бронетанклисемсĕр пуçне) 8 класран кайа мар вĕреннисене илеççĕ. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн чаçĕсенчипе нумай срукláха отпуска кайнисене 7 класран кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Çуран çар, кавалери, бронетанк (танкăлă-техникăлисемсĕр пуçне) тата çар хуçалăх училишчисене 8 класран кайа мар вĕреннисене, çар чаçĕсенчисемпе нумай срукláха отпуска кайнисене—7 класран кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Аслă шкулсенче вĕренекен студентсене тата 1937—1938 çулсенче вăтам шкултан (йе çавăн йевĕрлĕ шкулсене вĕренсе пĕтернисене) вырăс чĕлхипе тата математикăпа „хорошо" ытти предметсемпе „посредственно" паллăран кайа мар илсе вĕренсе тухнисене, çавăн пекех 1938 çулта вăтам шкулсенче вуннăмĕш классене йе техникумсемпе рабфаксен йулашки курсĕсене куçнă чухне вырăс чĕлхипе тата математикăпа „хорошо" ытти предметсемпе „посредственно" паллăран кайа мар илнисене çар училишчисене испытанисемсĕрех илеççĕ.

Çав çỹлте асăннинчен кайа вĕреннисене, çавăн пекех пĕлỹ илни çинчен документсем тăратманнисене вырăс чĕлхипе тата математикăпа вĕренме кĕрес тенĕ çар училищчин программи тăрăх испытани тыттараççĕ.

Зайавленисене вырăнти районти çар комиссарĕн йачĕпе йе тỹрех çар училишчин начаѣникĕн йачĕпе йараççĕ. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн красноармейцисемпе кĕçĕн комсоставсем—чаç командирĕн йе училишчăн начаѣникĕ йачĕпе йараççĕ.

Испытанисем училишчăсенче çак сруксенче пулаççĕ: çар чаçĕсенчи кандидатсемшĕн ийулĕн 20-мĕшпе 31-мĕшĕ хушшинче, ыттисемшĕн—августăн 1-мĕшпе 25-мĕшĕ хушшинче.

Занѣатисем октѣаберĕн 1-мĕшĕнчен пуçланаççĕ.

Вĕренмели срук çĕр çинчи çар училишчисенче пуринче те 2 çул.

Тĕрлĕ справкăсене районти çар комиссариачĕсенчен, çар училишчисенчен тата çар чаçĕсен штабĕсенчен илмеле. (ТАСС).

Шупашкар—Канаш—Патăрйел тракт тăрăх çурхи шыв вăхăтĕнче автомобилсем çỹретесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Çурхи шыв вăхăтĕнче çулсене сыхлас тĕлĕшпе Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. 1938 çулхи мартăн 30-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкар—Канаш—Патăрйел тракт тăрăх йавăр автомашинăсене ЗИС, ЯГ тата йавăр автобуссене, уйрăм хушу тухиччен, çỹреме чарас.

ГАЗ АА автомашинăсене 1 тоннăран ытла мар груза çỹреме ирĕк парас.

2. Автогужтреста çак вăхăтра пассажирсене çỹретессине ГАЗ АА моторлă автобуссемпе, 1,5 тоннăлă грузовиксемпе тата Шупашкар хулинчи учрежденисен çăмăл автомашинисемпе организацилеме хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Л. СПАСАВ.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхакан **Н. ЖУКАВ.**

Шупашкар хули.
1938 çулхи мартăн 29-мĕшĕ.

Биллиард, патефон тата домино туйанчĕç

ЙЕТĔРНЕ. Палтай йалсовечĕ çак кунсенче вулав çурчĕ валѣѣи биллиард, патефон тата домино туйанчĕ. Вулав çуртне 12 тĕрлĕ хаçат журналсем килсе тăраççĕ. Колхозниксем пушă вăхăтра пырса хаçат-журналсем вулаççĕ, биллиардла тата доминола выѣаççĕ.

Халĕ вулав çурчĕ çумĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенине вĕренмели кружоксем организацилерĕç. Кружоксĕне 57 колхозник тăтăшах çỹреççĕ.

М. Анисимăв.

Çĕнĕ пысăк клуб пулать

ЙЕТĔРНЕ. Кăташ йалсоветĕнчи „Пионер" колхоз çĕнĕ клуб туса пĕтерет. Клубра вулав пỹлĕмĕ, радиоузел тата спектакѣсем лартмали зал пулать. Клуба апрел уйăхĕнче туса пĕтерсе, майăн 1-мĕшĕнче уçаççĕ.

М. Моисейĕв.

Совет Сойузĕ тăрăх

●● Кăçал август уйăхĕнче иккĕмĕш совет велотурне туса иртереççĕ. Унта Сойузри спорт общĕствисен велосипедпа чи хăвăрт чупакансем 100 çын хутшăнаççĕ. Велотур маршручĕ: Мускав—Кийĕв—Минск—Ленинград—Мускав.

●● Кăçалхи çул Иванăвă облăçĕнчи колхозниксен ачисем акатата уйри тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра пурĕ çĕр пин ача йаслĕсенче пулмала.

●● Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкин комитечĕ выставкăра пулакансен пирвайхи списокисене „Сахăр кăшманĕ" павилѣйон тăрăх çирĕплетнĕ. Вăл спискăсенче—Киргизири, Украинăри тата Воронĕж облăçĕнчи колхозсем 86, малта пыракан звеносем 19 пур.

Кунсăр пуçне тĕш тырă кулѣтурисем тăрăх Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма кандидатсен шутне 409 колхоза çирĕплетнĕ. (ТАСС).

Максим Горькине хисеплесе вечĕр пулчĕ

Шупашкарти Тĕп библиотекăра мартăн 28-мĕшĕнче Максим Горький çурални 70 çул тултарнă йатпа вечĕр пулса иртрĕ.

Вечĕр икĕ пайлă пулчĕ. Малтан Максим Горькин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен Минейĕв йулташ („Çамрăк болѣшевик" хаçат редакторĕ) доклад туса пачĕ. Иккĕмĕш пайра Чăвашсен Государствă Академи Театрĕн артисĕсем М. Горькин „Йегор Булычев", „Амăшĕ" произведенисен сыпăкĕсене тата „Сокол çинчен хунă йурă", „Тăвăл йыхравçи" сăвăсене вуласа пачĕç.

Вечĕр пысăк хавасланхпа иртрĕ.

Арк. Неçтĕрăв.

Радио кĕртесси анлăн саралать

ТРАК. Мартынкасси йалсоветне кĕрекен 5 колхоз тата 44 хуçалăх радио кĕртрĕç.

Колхозниксем радио тăрăх панă йулашки хыпарсене, радиоконцертсене итлеççĕ. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне йалта радиоточкăсем татах нумайланмала.

И. Терентйĕв.

Х Р О Н И К Ă

* * ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **Н. М. Анцелович** йулташа Совет Контролѣ Комиççи председателĕн заместителĕ туса çирĕплетнĕ.

* * ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **М. З. Сабурăв** йулташа ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государствă План Комиççи председателĕн заместителĕ туса çирĕплетнĕ.

* * ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Халăх-хуçалăх учечĕн Тĕп управлени начаѣникне **И. В. Саутин** йулташа ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государствă План Комиççи председателĕн заместителĕ туса çирĕплетнĕ.

* * ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **С. А. Степанăв** йулташа Шыв транспăрт Халăх Комиссарĕн политикă пайĕпе ĕçлекен заместителĕ туса çирĕплетнĕ.

* * ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **А. С. Гродко** йулташа ССР Сойузĕн Йустици Халăх Комиссарĕн заместителĕ туса çирĕплетнĕ.

* * ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **Л. Й. Белахăв** йулташа ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Çурçĕр Тинĕс çулĕн Тĕп управлени начаѣникĕн политикă пайĕпе ĕçлекен заместителĕ туса çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

ПУЛНИ-ИРТНИСЕМ

●● Карачура йалĕнчи (Шупашкар р.) П. Ф. Водопйанăв Чебторгăн 13-мĕш №-лĕ ларйокĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ чухне государствă укçине 2290 тенкĕ растратă тунă, тата, айакри вырăнсене кайса çултăлăк ытла вăрттăн пурăннă. Мартăн 27-мĕшĕнче уголовнăй розыск ăна Шупашкарта тытнă. Растратчике арĕслесе суда панă.

●● Милици управлени работникĕсен столовăйĕнче апатланнă чухне, Федотăв йулташ шур çăкăр ăшĕнче тимĕр тỹмме тупнă. Вăл çăкăр столовăйне Шупашкарти 3-мĕш №-лĕ пекарнинчен илсе килнĕ пулнă. Çăкăр çине тỹмме йанăшăн айăплисене ответ тыттараççĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНОВ.

КОЛХОЗСЕНЕ ПĔЛМЕ

Выѣăх-чĕрлĕхе, аш-какайа Чăвашсойуза, Выѣăх хатĕрлекен тата Аш-какай хатĕрлекен организацисене договорсем тăрăх сутакан колхозсем валѣѣи Чăвашсойузăн Канашри базине „ГАЗ" системăлă 1,5 тоннăлă 20 грузовик килнĕ.

Кунсăр пуçне апрел уйăхĕнче çак таварсем килеççĕ: суртлă тимĕр 32 тоннă, строителствă валѣѣи тимĕр пăта 32 тоннă, пралук 3 тоннă, хуçалăхра кирлĕ сăнчăрсем 2 тоннă. Касса хатĕрленĕ вăрман—чăмăр йăвăç 100 кубла метр, заводра çурнă йăвăç 125 кубла метр, фанерă 15 кубла метр, çурт çине витме заводра туса хатĕрленĕ хулăн хут (толѣ) 550 чĕрке, велосипедсем 100 штук, велосипед камерипе покрышки 600 штук.

Таварсене сутмали йĕрке:

Таварсене выѣăх-чĕрлĕх, аш-какай сутнин 50 проц. чухлĕ хаклăх шутласа параççĕ.

СĂМАХРАН: Пĕр грузовик илме колхозăн 11525 тенкĕлĕх выѣăх-чĕрлĕх йе аш-какай памала.

Таварсене илнĕ чух колхоз председателĕн хăйĕнпе пĕрле çак хутсем пулмала: выѣăх йе аш-какай хатĕрлев пунктĕнчен йе Чăвашсойузăн хатĕрлев кантурĕнчен илнĕ выѣăх-чĕрлĕх йе аш-какай сутнине кăтартакан квитанци, çак организацисемпе тунă договор тата тавар илме шантарса панă хут автомашинăсене Чăвашсойузăн Канашри базинче çеç параççĕ, ытти тĕрлĕ таварсене райсойузсем урлă сутаççĕ.

Выѣăх-чĕрлĕхе, аш какайа государствăна сутма договор тунă колхозсем, хăвăр тунă договора пурнăçласа кирлĕ таварсене илсе йулма тăрăшăр!

Чăвашсойузăн хатĕрлев управленийĕ.

Канăва лайăх йĕркелемеле

Кашни рабочи, инженер, техник тата служащчи хăйĕн кану вăхăтне савăнăçлăн иртерме тăрăшать. Ку çапла, мĕншĕн тесен канăç прави пирĕн социалисăмла çĕршывра, патша саманинче пулнă пек уйрăм çынсен—харампырсен аллинче мар, ĕççыннисен пурнăçĕнче пур аслă правасенчен пĕри пулать. Вăл права рабочисемпе хресченсен социалисăмла государствин Тĕп саккунĕ—Сталинла Конституци çине çырса çирĕплетнĕ.

Канăç ыйтăвĕ пуринчен ытларах çуллахи вăхăтра пысăккăн тухса тăрать. Çулла канмали çуртсем, курортсем ĕçлеме тытăнаççĕ, екскурсисене çỹреме, физкулѣтурăпа порт ĕçне вайлатма условисем нумайрах пулаççĕ. Вĕсемпе усă курма хатĕр пулмала.

Пайана илсен çуллахи кану вăхăтне туллин иртерме профсойузсем те, хуçалăх организацисем те тивĕçлипе хатĕрленме тытăнман-ха. Тĕслĕхшĕн вăрман савăчĕсемпе йăвăç каскалакан промышлĕннăçри рабочисен сойузĕн облăçри комитетнех илер. Ку сойуз кăçал 295 çынна Илйинкăри канмали çурта, 18 çынна инçĕтри курортсене, 39 çынна санаторисене тата пĕр кунхи канмали çурта 150 çынна йама палăртнă. Унсăр пуçне чылай рабочисене екскурсисене йамала. Ачасене пионерсен лагерне йама 12 пин тенкĕ уйăрнă. Тепĕр çавăн чухлĕ хапрăк-савăт комитечĕсемпе хуçалăх организацисем йараççĕ.

Ку лайăх. Анчах сойуз пĕрлештерсе тăракан ытти виçĕ пин çынăн хăйсен çуллахи кану вăхăтне ăçта тата мĕнле иртермеле пулать-ха? Кун çинчен сăмах пуçлансан облăçри комитет руководителĕсем, „ГТО" значокĕ илме нормăсем парассине организацилеме хушса, вырăнсене çырусем йанине çине кăтартса параççĕ. Кунашкал калама кану вăхăтне организацилес ĕçĕн тутимасине пĕлмен, ĕççыннисен ыйтăвĕпе интересленмен, çынсем çеç пултараççĕ.

Вăрман хатĕрленĕ тата йухтарнă çĕрти рабочисене пĕрлештерекен тата ытти отраçлĕри рабочисен сойузĕсем те тивĕçлипе ĕçлеме пуçанман. Кану вăхăтне иртерессине рабочисене канмали çуртсемпе курортсене йанинче çеç курнă пирки те ĕнтĕ сойузсен облăçри комитечĕсем ку тарана çитсе те плансем туман.

Канăç прави ĕçлев правипе çирĕп çыхăнура тăрать. Тухăçлă ĕçлени кану вăхăтне савăнăçлăн иртерме, çавнашкалах канăçа лайăх йĕркелени стахановла ĕçлеме пулăшать. Апла пулсан, хуçалăх организаци руководителĕсен, партипе комсомол тата профсойуз организацисен канăç вăхăтне йĕркелесси çине те производствă ыйтăвĕсем çине пăхнă пекех тимлĕн çавăрăнса пăхмала. Анчах хăшпĕр хуçалăх организацисен хытă пуçлă руководителĕсем канăç ыйтăвĕпе ĕçлессинчен пăрăнса тăраççĕ. Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче рабочисем валѣѣи кану вăхăтне лайăх иртерме условисем туса паманни çинчен сигналсем нумай пулнă. Рабочисем хаçат-журналсем вăхăтра тăратманни, кулѣтурă хатĕрĕсем çитĕлĕксĕрри, вĕрену ĕçне йĕркеленмени çинчен çыраççĕ. Управлени начаѣникĕ Вавалкин йулташ та, партком секретарĕ те, постройком председателĕ те вĕсен çине çавăрăнса пăхмаççĕ. Тухса çỹреме вăхăт тупаймаççĕ имĕш вĕсем.

Пирĕн кулленхи кун чечĕкленсе пыракан çĕршывра канăçа чаплăн, савăнăçлăн иртерме мĕн кирли пурте пур. Вăрмансем, шывсем, стадионсем, клубсем, сатсем. Çĕршывăн сутçанталăкăн пуйанлăхĕсем пĕтĕмпех пирĕн алăра. Мĕн кирлĕ тата? Куллен тимлĕн ĕçлени, массăсен интересĕшĕн тăрашни кирлĕ. Ĕççыннисен массисен хушшинче кану вăхăтне кулѣтурăлă та савăнăçлă организацилеме пултаракансем çĕршерĕн, пиншерĕн пур. Вĕсенчен вĕренмеле, вĕсене массăлă ĕçе тума йавăçтармала.

Çуллахи вăхăтра хамăр çĕршывăн пуйанлăхĕсемпе паллашма çулçỹреме тухма ĕмĕтленекенсем нумай. Вĕсемпе екскурсисене кайассине организацилемеле. Нумайĕшĕсем техникăн, искусствăн историйĕсене пĕлесшĕн, халѣхи ỹсĕмсемпе паллашасшăн çунаççĕ, вĕсене музейсене илсе çỹремеле. Совет çыннисем физкулѣтурăпа спорт ĕçне саваççĕ. Апла пулсан, физкулѣтурă ĕçне вăйлатмала. Кашни предприйати çумĕнче стадион, волейбол плошчадкисем пулччăр. Совет çыннисем музăка йуратаççĕ. Ку ĕçе тума та майсем çителĕклĕ. Ĕççыннисем хушшинче кунсерен талантсем çуралаççĕ. Вĕсене хăйсен пултарулăхне массăсен умĕнче кăтартма, вĕренме пулăшмала.

Клубсене, сатсене, физкулѣтурă плошчадкисене—кану вăхăтне чăнчăн савăнăçлăн иртермели вырăнсем тумала. Унта радио, хаçат-журналсем, шашкă-шахмăтсем пулччăр. Ташламали, тĕрлерен вăйăсем выѣамали хатĕрсем пулччăр. Йĕркелĕх, тасалăх, кулѣтурăлăх пултăр. Çавнашкал тума хуçалăхпа профсойуз организацисен халех хатĕрленмеле.

Вĕсем те çителĕксĕр-ха. Рабочисемпе инженерла-техникла работниксене тата служăшчисене лайăх канăç пама пĕтĕм массăлă ĕçе кашни уйрăм предприйатинчи условисене хисепе илсе, рабочисен ыйтăвĕсене шута илни тăрăх туса пыни кирлĕ. Çапла тусан вара кану ĕçне канса иртермеле çеç мар, ĕççыннисене кулѣтурăлă пурăнма вĕрентмеле йĕркелеме пултаратпăр.

Пĕтĕм Сойузри радиокомитетăн агитаципе пропагандă сектăрĕн 1938 çулхи апрелѣ уйăхĕнче паракан тĕне хирĕçле передачăсен ТЕМИСЕН ПЛАНĔ

Апрелĕн 3-мĕшĕнче Коминтерн йачĕпе тăракан станци урлă 17 сехет те 30 минутран пуçласа лекци—„Тĕн праçникĕсем пуçланса кайни" çинчен.

Апрелĕн 10-мĕшĕнче Коминтерн йачĕпе тăракан станци урлă 17 сехет те 30 минутран пуçласа—калаçу:—„Коммуниссен парти мĕншĕн тĕне хирĕç кĕрешет". РЦЗ станцийĕ—20 сехет те 20 минутран пуçласа лекци: „Етем ăçтан пулнă".

Апрелĕн 17-мĕшĕнче Коминтерн йачĕпе тăракан станци урлă 17 сехет те 30 минутран пуçласа лекци: „Мăнкун пуçланса кайни тата вăл класс тĕлĕшпе мĕнле вырăнта тăни" çинчен.

Апрелĕн 24-мĕшĕнче Коминтерн йачĕпе тăракан станци урлă 17 сехет те 30 минутран пуçласа калаçу: „Христос çинчен калакан йумах".

Вăрçăлă турăсăрсен совечĕн республикăри совечĕ.

Академи театрĕнче

Мартăн 30-мĕшĕнче
Вырăсла спектакѣ
ШЕКСПИР
ОТЕЛЛО
(4 пайлă)
Аслă режиççор
Г. В. СТРАНСКИЙ
лартать.
Талон № 152.

АНОНС! П. Н. Осипăв **АЙДАР**
Рахманăв **ПРОФЕССĂР ПОЛЕЖАЙĔВ**
лартма хатĕрленеççĕ.

Шупашкарти Водопровод кантурĕ

Шыв будкисенчен шыв илекенсене
Шыв илме абонемент кĕнекисем илме сĕнет.
Кĕнекесене „Водосветăн" абонент сĕтелĕнче сутаççĕ.
Кăтартма çурт кĕнеки илсе пымала.
„Водоканализаци" тытăмĕ.
3—1

Шупашкарти хăма çуракан завод „Крестьянин"

учрежденисене, колхозсене тата уйрăм çынсене пăр çинче выртакан хăйсен хăма-материалĕсене илсе тухма ыйтать. Апрелĕн 1-мĕшĕ иртсен хăма-материалĕсене илсе тухма тухакан расхутсене хуçисем тỹлеççĕ.
ДИРЕКЦИ.

Шупашкарти Спирт заводне

шут ĕçне пĕлекенсем
кирлĕ.
2—1

Чăваш кĕввисем çырнă тетрате тупакана

Чапайĕв поçолкинчи Студенческая урамри 28-мĕш № çурта пырса пама ыйтаççĕ.
—Тупнăшăн укçа тỹлеççĕ.

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 168. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.